ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Март
9
ТУНТИКУН
№ 49 (8958)

36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Çак хурлăхлă кунсенче пирĕн çĕршыври пур халăхсем те, Ленинпа Сталин туса вĕрентсе çитĕнтернĕ Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, тăванла аслă çемьере тата тачăрах пĕтĕçеççĕ.

ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ СТАЛИН

Коммунистсен партийĕ тавра тачăрах пĕтĕçер!

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕшĕн, пирĕн çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисемшĕн питĕ пысăк çухату пулчĕ. Ленин соратникĕн, унăн ĕçне генилле туса пыраканăн, Коммунистсен партийĕпе совет халăхĕн ăсларан та ăслă çулпуçĕпе учителĕн Иосиф Виссарионович Сталинăн чĕри тапма чарăнчĕ.

Сталинăн вилĕмсĕр ячĕ пирĕн Тăван çĕршыври çынсен чĕринче тата пĕтĕм прогрессивлă çынсен чĕринче яланах пурăнĕ. Унăн ячĕ Совет Союзĕ çĕнтерÿллĕ аслă çĕршыв пулнине палăртса тăрать, халăхсен малашнехи ырă пурнăçĕшĕн кĕрешме чĕнет.

«Рабочи класа çĕклентерсе пырас, çак класăн социализмлă государствине тĕреклетес тесе ĕçленĕ чухнехи манăн кашни утăм рабочи класс положенине çирĕплетсе тата лайăхлатса пырас енĕпе пулса пыман пулсан, вара эпĕ хамăн пурнăç усăсăр тесе шутланă пулăттăм», — тесе каланă Сталин юлташ.

Ленинпа пĕрле Сталин юлташ коммунистсен хăватлă партине туса вĕрентсе ÿстернĕ, ĕçсыннисене ирĕке кăларассишĕн пынă хаяр çапăçусенче çирĕплетнĕ, Октябрьти Социализмлă Аслă революцие хавхалантараканĕ тата унăн çулпуçĕ пулнă, тĕнчери пĕрремĕш социализмлă государство никĕсне хываканĕ пулнă. Ленинăн вилĕмсĕр ĕçне малалла туса пырса, Сталин юлташ совет халăхне ССР Союзĕнчи социализмăн пĕтĕм тĕнчипе паллă историллĕ çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерчĕ. Сталин юлташ ăсларан та ăслă ертсе пынипе пирĕн халăх хамăрăн Тăван çĕршывăн чысне, ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварчĕ, Аслă Отечественнăй вăрçăра пĕтĕм тĕнчипе паллă историллĕ çĕнтерÿ турĕ, этемлĕхе фашизм пусмăрĕн хăрушлăхĕнчен çăлса хăварчĕ.

Вăрçă хыççăнхи вăхăтра Коммунистсен партийĕ, Сталин юлташ совет халăхне хамăр çĕршывăн халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантарма хавхалантарса организацилерĕç. Совет çыннисем вăрçă хыççăн кĕске вăхăтра вăрçă чухне ишĕлтернĕ промышленноçа, транспорта тата ялхуçалăхне юсаса çитерчĕç, социализмлă экономикăн пур отраслĕсене те вăрçă умĕнхи шайран чылай мала иртерчĕç.

Пирĕн парти хăйĕн пĕтĕм ĕçне марксизм-ленинизм теорийĕ тăрăх туса пырать, çавăнпа пирĕн партин вăйĕ питĕ пысăк. Ленин вĕрентни çине таянса, марксизм-ленинизм теорине аталантарса тата пуянлатса пырса, Сталин юлташ хамăр çĕршыври социализм строительствин опытне пĕтĕçтерчĕ, партие тата пĕтĕм халăха коммунизмшăн кĕрешмелли аслă та уçăмлă программăпа хĕçпăшаллантарчĕ. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕн пĕлтерĕшĕ марксизм-ленинизм теорийĕшĕн, пирĕн пĕтĕм практикăллă ĕçшĕн калама çук пысăк.

Коммунизм обществи тумалли сталинла изукăпа, XIX-мĕш съездăн историллĕ решенийĕсемпе хĕçпăшалланнă пирĕн парти халăха ырă тĕллев патне—коммунизм патне шанчăклăн ертсе пырать. Совет халăхĕ хăйĕн тăван Коммунистсен партине чунтан-чĕререн шанса тăрать тата хĕрÿллĕн юратать, мĕншĕн тесен вăл партин пĕтĕм ĕçĕнчи чи аслă закон халăх интересĕсемшĕн тăрăшса ĕçлесси пулнине пĕлсе тăрать.

Пирĕн çĕршыври рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенчĕсем, мĕнпур ĕçсыннисем çакна лайăх пĕлсе тăраççĕ: парти совет çыннисен пĕрмаях ÿссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене çителĕклипех тивĕçтерессишĕн яланах тăрăшать. Вĕсем тата çакна та пĕлсе тăраççĕ: парти, кирек хăш агрессора та тĕпренех аркатса тăкма яланах хатĕр пулас тесе, Совет Çарне, Тинĕс-Çар Флотне тата разведка органĕсене пур майсемпе те тĕреклетсе пырать. Вĕсем çакна пĕлсе тăраççĕ: Коммунистсен партийĕпе Совет Союзĕн правительствин тулашри политики вăл—мире сыхласа хăварса çирĕплетес политика пулать.

Пролетариллĕ интернационализм ялавне тÿррĕн тытса пырса, Совет Союзĕнчи халăхсем аслă Китай халăхĕпе, халăх демократиллĕ мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисемпе тăванла туслă пурăнассине, капитализмлă çĕршывсемпе колониллĕ çĕршывсенчи мир ĕçĕшĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешекен ĕçсыннисемпе туслă çыхăну тытассине тĕреклетсе тата аталантарса пыраççĕ.

Çак хурлăхлă кунсенче пирĕн çĕршыври пур халăхсем те Ленинпа Сталин туса вĕрентсе çитĕнтернĕ Коммунистсен партийĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçеççĕ.

Совет халăхĕ çакна çирĕппĕн шанса тăрать: Сталин юлташ вĕрентсе ÿстернĕ унăн шанчăклă ученикĕсемпе соратникĕсем пирĕн партипе правительство туса хатĕрленĕ политикăна хамăр çĕршывăн шалти ĕçĕсем енĕпе те, тĕнчери ĕçсем енĕпе те пĕтĕмпех ăнăçлăн пурнăça кĕртмелле тăвĕç. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ çĕнтерÿсем туса пынă, çĕнтерÿсем туса пырать тата малашне те çĕнтерÿсем туса пырĕ, мĕншĕн тесен вăл ĕçсыннисен йышлă массисемпе тачă çыхăнса тăрать.

Парти речĕсен хурçă пек çирĕп пĕрлĕхĕ, тачăран та тачă пĕтĕссе тăни — партин вăйĕпе хăвачĕн тĕп условийĕ пулать. Пирĕн задача — партин пĕрлĕхне куç шăрçине сыхланă пек сыхласси, коммунистсене парти политикипе унăн решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешекен политикăллă активлă боецсем пулма вĕрентсе пырасси, парти мĕнпур ĕçсыннисемпе, рабочисемпе, колхозниксемпе, интеллигенципе çыхăнса тăрассине татах та ытларах çирĕплетесси пулать. Коммунистсене тата мĕнпур ĕçсыннисене политика енĕпе питех те сыхă пулма, шалти тата тулашри тăшмансене хирĕç ним килĕшмесĕр çирĕп кĕрешме вĕрентсе пымалла.

Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе Совет Союзĕнчи халăхсем коммунизмăн аслă çуртне ăнăçлăн тăваççĕ.

«Совет обществи хăватлăн малалла пынине чарса лартма пултаракан вăйсем тĕнчере çук, — тесе каланă партин XIX-мĕш съездĕнче Г. М. Маленков юлташ.— **Пирĕн ĕçе никам та çĕнтерме пултараймасть. Руле алăра çирĕп тытмалла, провокацисене те, хăратнисене те пăхса тămасăр, хамăр çулпа каймалла».**

Пирĕн çĕршывра партипе государство руководствин рулĕ—шанчăклă алăра, аслă Сталинăн шанчăклă ученикĕсемпе соратникĕсен аллинче. Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Чĕнсе калани çине ответлесе, партипе пирĕн Тăван çĕршыври мĕнпур ĕçсыннисем Центральнăй Комитетпа Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçеççĕ, хăйсен пĕтĕм вăйĕпе творчествăллă хăватне хамăр çĕршывра коммунизм туса çитерес аслă ĕçе параççĕ.

(«ПРАВДА» хаçат умстатьи, 1953 çулхи мартăн 8-мĕшĕ.)

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ çапла йышăнать:

1953 çулхи мартăн 9-мĕшĕнче, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕпе тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕпе Иосиф Виссарионович Сталина пытарнă кун, траур майĕпе, пуçламăш, çичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсенче занятисем ирттермелле мар.

ССР СОЮЗĔН МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ йышăннă ПОСТАНОВЛЕНИ

Кăçалхи мартăн 9-мĕшĕнче, тунтикун, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕн тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕн, Генералиссимус Иосиф Виссарионович Сталинăн ÿтне пытарнă самантра, Мускав вăхăчĕпе кăнтăрла шăп 12 сехетре Мускавра, союзлă республикăсен столицисенче, герой-хуласенче: Ленинградра, Сталинградра, Севастопольре тата Одессăра, çавăн пекех Калининград, Львов, Хабаровск, Владивосток хулисенче артиллерирен персе салют памалла.

Кăнтăрла шăп 12 сехетре Совет Союзĕн территорийĕнчи мĕнпур предприятисен ĕçне, мĕнпур чугун çул, шыв çул, автомобиль транспорчĕн ĕçне, чарăнмасăр ĕçлекен предприятисемсĕр пусне, 5 минутлăха чарса лартмалла.

Кăнтăрла шăп 12 сехетре фабрикăсенче, заводсенче, чугун çул çинче, юханшывпа тинĕс флочĕн суднисем çинче 3 минут хушши гудоксем кăшкăртса салют памалла.

СОВЕТ СОЮЗĔНЧИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНАЙ КОМИТЕЧĔ.

ССР СОЮЗĔН МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ.

Совет Çарĕн войскисене панă ПРИКАЗ

1953 çулхи мартăн 8-мĕшĕ. *№ 35.* *Мускав хули.*

Юлташсем—салтаксемпе сержантсем!

Юлташсем—офицерсемпе генералсем!

Пирĕн халăх, пирĕн çар умне пысăк хурлăх килсе тухрĕ. ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ, Коммунистсен партийĕпе Совет халăхĕн аслă çулпуçĕ, Совет государствин руководителĕ аслă Сталин вилсе кайрĕ. Генилле полководец, Совет Союзĕн Генералиссимусĕ И. В. Сталин пирĕн хушăмăрта текех çук.

Сталин ячĕ пирĕн партишĕн, совет халăхĕшĕн тата унăн Çарĕшĕн, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисемшĕн вĕçĕмсĕр хаклă. Сталин юлташ хăйĕн пĕтĕм пурнăçне халăх ĕçĕшĕн, коммунизм тăвас ĕçшĕн пĕтĕмпех пачĕ. Ленинпа Сталин коммунистсен хăватлă партине туса çитĕнтерчĕç, ăна вĕрентсе ÿстернĕ тата пиçĕхтернĕ, Совет государствипе унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене туса тĕреклетнĕ.

Совет Çарĕн пĕтĕм историйĕ, граждан вăрçипе Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенчи унăн çĕнтерĕвĕсем аслă Сталин ячĕпе уйрăлми таччăн çыхăнса тăраççĕ. Хăйĕн Верховнăй Главнокомандующийĕ Совет Союзĕн Генералиссимусĕ И. В. Сталин ертсе пынипе, унăн генилле планĕсем тăрăх, Совет çĕршывĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем фашистла Германипе империалистла Японие пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкрĕç, хамăрăн Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне сыхласа хăварчĕç, Европăпа Ази халăхĕсене фашистла чуралăхран хăтарчĕç.

Совет Çарĕ чĕререн хурланса хăйĕн боевой ялавĕсене хăйĕн генилле полководецĕн тупăкĕ умĕнче тайăлтарать.

Юлташсем—салтаксемпе сержантсем, офицерсемпе генералсем!

Хамăр ретсене Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçтерер.

Хаклă та юратнă учительпе, çулпуçпа тата полководецпа Сталин юлташпа сывпуллашса, Совет Çарĕн боевой хăватне ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетме, вăл çапăçăва хатĕр тăрассине тата яланах сыхă пулассине ÿстерме, совет халăхĕн ăнăçу кÿрекен ĕçне шанчăклăн сыхласа тăма, Совет Союзĕн государство интересĕсене çирĕппĕн сыхласа тăма тупа тăвар.

Совет халăхĕ çакна шанса тăма пултарать: унăн Çарĕ, вилĕмсĕр Сталин хушса хăварнисене чĕрере тытса тăрса, Советлă Тăван çĕршыв умĕнчи хăйĕн таса тивĕçне чыслăн пурнăçлама яланах хатĕр.

ССР Союзĕн Çар Министрĕ Совет Союзĕн Маршалĕ

Н. А. БУЛГАНИН.

ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Вăйĕсене панă ПРИКАЗ

1953 çулхи мартăн 8-мĕшĕ. *№ 21.* *Мускав хули.*

Юлташсем—матроссем, салтаксем, старшинасем тата сержантсем!

Юлташсем—офицерсем, адмиралсем тата генералсем!

Совет çар морякĕсем пирĕнтен уйрăлса кайнă, пирĕншĕн вĕçĕмсĕр хаклă аттемĕрпе учителĕмĕрĕн, аслă полководецăн, Совет Союзĕн Генералиссимусĕн Иосиф Виссарионович Сталинăн таса та çутă ячĕ умĕнче пирĕн партипе тата халăхпа пĕрле хăйсен боевой ялавĕсене чĕререн хурланса тайăлтараççĕ.

Ленинпа Сталин пирĕн хăватлă Коммунистсен партине туса çитĕнтерчĕç, тĕнчери пĕрремĕш Советлă Социализмлă государствăн тата унăн Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕн никĕсне хыврĕç.

Граждан вăрçи çулĕсенче Сталин юлташ генилле ертсе пынипе çамрăк Совет государствин нумай йышлă тăшманĕсене хирĕç кĕрешсе историллĕ аслă çĕнтерÿсем тунă.

Аслă Отечественнăй вăрçăн йывăр çулĕсенче генилле полководец Сталин юлташ ертсе пынипе пирĕн халăх тата унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем фашизма çĕнтерчĕç.

Сталинăн вилĕмсĕр ячĕ совет халăхĕпе унăн воинĕсен чĕринче ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ.

Юлташсем—матроссем, салтаксем, старшинасем тата сержантсем!

Юлташсем—офицерсем, адмиралсем тата генералсем!

Эпир Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет Союзĕн Правительстви тавра тата ытларах таччăн пĕтĕççе çирĕппĕн тăрăпăр тесе, хамăрăн Тăван çĕршыв тăшманĕсем тĕлĕшпе ним килĕшмесĕр кĕрешме, Тинĕс-Çар Флочĕн боевой хăватне ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетме, хамăрăн Тăван çĕршывăн тинĕс чиккисене тата совет халăхĕн мирлĕ ĕçне, Ленин—Сталинăн çĕнтерÿллĕ ялавĕ айĕнче коммунизм тăвакан халăхăн мирлĕ ĕçне тимлĕн сыхлама Сталин юлташ хушса хăварнисене вĕçне çитиех чыслăн пурнăça кĕртĕпĕр тесе, пирĕн аслă çулпуçăмăрпа полководец Иосиф Виссарионович Сталин тупăкĕ умĕнче тупа тăвар.

ССР Союзĕн Тинĕс-Çар Министрĕ вице-адмирал

Н. Г. КУЗНЕЦОВ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне

Арменири Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, Армян Советлă Социализмлă Республикин Министрĕсен Совечĕ тата Верховнăй Совет Президиумĕ, Арменири мĕнпур ĕçсыннисем Ленинăн ĕçне малалла генилле туса пыракан, совет халăхĕн аслă ашшĕпе учителĕ, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Иосиф Виссарионович Сталин вилнĕ пирки чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ. Вăл хăйĕн пĕтĕм пурнăçне коммунизм тăвас аслă ĕçе панă.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ, Ленинпа Сталин туса хунă тата пиçĕхтерсе çирĕплетнĕ парти совет халăхĕн мĕнпур çĕнтерĕвĕсен организаторĕ пулса тăрать. Армян халăхĕн мĕнпур çитĕнĕвĕсем Коммунистсен партийĕн аслă çулпуçĕсен Ленинпа Сталинăн ячĕсемпе тачă çыхăнса тăраççĕ.

Советлă Арменири рабочисем, колхозниксем, интеллигенци тата мĕнпур ĕçсыннисем Совет Союзĕнчи Коммунистсен Партийĕн Центральнăй Комитетне тата Совет правительствине политикăлла сыхăлăха çÿлерех çĕклĕпĕр, шалтипе тулашри тăшмансене хирĕç ним хĕрхенмесĕр кĕрешĕпĕр, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçĕпĕр, хамăр çĕршывра коммунизм тăвассишĕн пыракан аслă кĕрешÿре вăй-хăват хурăпăр тесе шантарса калаççĕ.

Совет халăхĕн тата пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн аслă çулпуçĕн, армян халăхĕн тусĕн тата ăна ирĕке кăларакан — Сталин юлташăн ятне Арменири ĕçсыннисем ĕмĕр-ĕмĕр чĕрере тытĕç.

АРМЕНИРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНАЙ КОМИТЕЧĔ.

АРМЯН ССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ.

АРМЯН ССР ВЕРХОВНАЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Мускав область комитечĕпе Мускав хула комитетĕнчен

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Мускав область Комитечĕпе Мускав хула комитечĕ Мускав парторганизацийĕн членĕсене тата Мускав хулипе Мускав облаçĕнчи мĕнпур ĕçсыннисене Коммунистсен партийĕн, совет халăхĕн, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕпе учителĕ, СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ, КПСС Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Иосиф Виссарионович **Сталин** вăхăтсăр вилни çинчен питех те хытă хурланса пĕлтереççĕ.

Сталин юлташ вилнипе пирĕн парти тата совет халăхĕ Ленинăн соратникне, унăн ĕçне малалла генилле туса пыракана, рабочи класăн ĕçне, халăхшăн тăрăшас ĕçе, коммунизм тăвас ĕçе хăйĕн путтăр пурнăçне панă, нимĕнрен хăраман революционерă çухатрĕç.

Ленинпа пĕрле **Сталин** юлташ Коммунистсен хăватлă партине туса хунă, ăна пиçĕхтерсе çирĕплетнĕ; Ленинпа пĕрле **Сталин** юлташ Октябрьти Социализмлă Аслă революцие хавхалантарнă, революци çулпуçĕ, тĕнчери социализмлă пĕрремĕш государствăна туса хуракан аслă строитель пулнă.

Иосиф Виссарионович **Сталин** генилле ертсе пынипе совет халăхĕ социализмлă общество турĕ, Аслă Отечественнăй вăрçăра историллĕ çĕнтерÿ турĕ, этемлĕхе фашизм пусмăрĕн хăрушлăхĕнчен хăтарчĕ, пирĕн çĕршыва социализмла хăватлă держава—мир, демократи тата социализм лагерне ертсе пыракан держава туса хучĕ.

Генилле теоретик пулса, **Сталин** юлташ марксизм-ленинизма нумай пуянлатрĕ, пирĕн партие тата пĕтĕм совет халăхне ССР Союзĕнче коммунизм тумалли аслă программăпа хĕçпăшаллантарчĕ.

Мускав ĕçсыннисем тăван **Сталин** юлташпа пĕр хулара ĕçлесе пурăнчĕç,—çакă вĕсемшĕн пысăк телей пулчĕ. Мускав парторганизацийĕ, столицăри тата Мускав облаçĕнчи ĕçсыннисем Иосиф Виссарионович **Сталин** ăслă ертсе пынипе тата тăван атте пек тăрăшнипе яланах туйса тăчĕç.

Хамăрăн тăван юратнă **Сталин** вăхăтсăр вилнĕ пирки чун-чĕререн хурланса, Мускав хулипе Мускав облаçĕнчи коммунистсемпе мĕнпур ĕçсыннисем пирĕн çĕршывра коммунизм тăвас тĕлĕшпе хăйсен хастарлăхне татах ÿстерсе ĕçлĕç, политикăлла сыхăлăха вăйлатĕç, партин ленинла-сталинла Центральнăй Комитечĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçĕç.

Иосиф Виссарионович **Сталинăн** çутă сăнарĕ ĕçсыннисен чĕринче ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ, вĕсене социализмлă Тăван çĕршыва малалла тĕреклетессишĕн, коммунизм чаплăн та татăклăнах çĕнтерессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хавхалантарса тăрĕ.

И. В. Сталин тупăкĕ патне Чăваш республикинчи ĕçсыннисенчен чечек кăшăлĕ хуни

Иосиф Виссарионович Сталина пытарас ĕçе хутшăнма Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикинчен кайнă делегаци Мускава çитнĕ. Делегаци составĕнче: КПСС Чăваш обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Т. А. Ахазов, КПСС обком секретарĕ Н. А. Шмаков, Улатăр хулинчи вăтам шкул учительници РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ В. Д. Распопова, Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕн председателĕ М. Д. Шумилов, Муркаш районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Е. А. Андреев тата Шупашкарти Электроаппаратура заводĕнчи работница К. А. Александрова юлташсем. Мартăн 8-мĕшĕнче, 14 сехет те 50 минутра ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ тупăкĕ умне Чăваш республикинчи ĕçсыннисен ячĕпе делегаци чечек сыххи хунă. Ун çине çапла çырнă: «Аслă çулпуçа, тăван аттене Иосиф Виссарионович Сталина. Чăваш АССРĕнчи ĕçсыннисенчен».

Чечек сыххи хунă хыççăн делегаци членĕсем пурте Иосиф Виссарионович Сталин тупăкĕ умĕнче хисеплĕ хуралта тăнă.

ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ СТАЛИН

Аслă Сталин тупăкĕ умĕнче

Совет халăхĕ ĕçсыннисен аслă çулпуçĕпе сывпуллашать. Мускав урамĕсем тăрăх Союзсен Çуртĕ еннелле вĕçĕ-хĕррисĕр халăх утать. Союзсен Çуртĕн Колоннăллă залне И. В. Сталинăн ÿтне хунă тупăка вырнаçтарса лартнă. Çулпуç тупăкĕ умĕнчен çынсем пысăк шухăша кайса иртеççĕ. Кашни совет çынни, пысăк çухату пулнине туйса, Ленин—Сталин ялавне таса усрама ăшра тупа тăвать. Кашни çыннăн пуçне: Сталин юлташăн вилĕмсĕр ячĕ ялан пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн чĕринче пурăнать тесе, совет çыннисем хăйсен речĕсене партн тавра тата тачăрах пĕтĕçтерĕç тесе, хăйсен мĕнпур вăйĕсене пирĕн çĕршывра коммунизм тума мобилизацилĕç тесе хăйне тата партие калас шухăш пырса кĕрет.

Питĕ ир. Анчах Союзсен Çуртĕ сывăхĕнчи урамсем хушшинче халăх, çĕрлехи пекех, тулли. Нумайăшĕ кунта ĕçрен тÿрех килнĕ. Кунта рабочисем, колхозниксем, совет интеллигенцийĕ, Совет Çарĕн воинĕсем, совет халăхĕсен аслă çемйин представителĕсем: вырăссемпе украинецсем, белоруссемпе грузинсем, хĕвеллĕ Армени ывăлĕсемпе хĕрĕсем, инçетри Якути представителĕсем.

Зала метро тăвакансен делегацийĕ пырса кĕрет. Вĕсем сталинла план тăрăх çĕршыв столицинче çĕр айĕнчи чаплă двореца—тĕнчери чи лайăх метрополитена тунă. Мускав университетне тăвакансем пысăк чечек кăшăлĕ илсе пынă. Университет çуртĕ—сталинла саманари пысăк суртсенчен пĕри. Наука академийĕн делегацийĕ наукăсен аслăран та аслă корифейĕн И. В. Сталинăн тупăкĕ çине Совет ученăйĕсен ячĕпе хума чечек кăшăлĕ çĕклесе кĕрет.

Паян Мускава союзлă республикăсен делегацийĕсем, облаçсен представителĕсем килсе çитме пуçларĕç. Колоннăллă зала Советлă Узбекистан халăхĕ суйласа янă представительсем пырса кĕреççĕ. Вĕсем Сталин юлташа узбек халăхĕ вĕçĕмсĕр юратнине кăтартса параççĕ. Узбекистан Сталин юлташ тăрăшнипе чечекленнĕ. Делегаци темиçе пысăк чечек çыххи илсе кĕрет. Çулпуç тупăкĕ умĕнчен казах халăхĕн пысăк делегацийĕ иртсе пырать. Казах халăхĕ çулпуçпа сывпуллашма республика руководителĕсене, рабочисене, колхозниксене, писательсене, ученăйсене суйласа янă. Ленинла-сталинла наци политикине пурнăçланипе кăна хăйĕн телейĕпе ирĕклĕхне илнине, малта пыракан советлă наци пулса тăнине казах халăхĕ нихçан та манас çук. Карело-Финн ССР-ĕнчи ĕçсыннисен представителĕсем иртсе пыраççĕ.

Вĕçĕ-хĕррисĕр халăх пырать. Станоксем тăвакан Орджоникидзе ячĕпе тăракан заводри, Сталин ячĕпе тăракан хими заводĕнчи рабочисем, Балашиха районĕнчи шкулсенче вĕрентекен учительсем, архитекторсем, композиторсем пыраççĕ. Совет çĕршывĕн ĕç ветеранĕсемпе çамрăк граждансем, арçынсемпе хĕрарăмсем пыраççĕ. Кашни хăйĕн чĕринче Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр юратма, аслă çулпуçĕпе учителĕн вилĕмсĕр ĕçне малалла туса пыма тупа тăвать.

Зала Мао Цзэ-дун ячĕпе пысăк чечек кăшăлĕ илсе кĕреççĕ. Аслă Китай халăхĕн представителĕсем тупăк умне Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетĕнчен, Халăхăн политикăллă консультативнăй совечĕн Пĕтĕм Китайри комитетĕнчен, Чжоу Энь-лай ячĕпе, Китай Халăх Республикин Совет Союзĕнчи Чрезвычайнăй тата Полномочнăй посолĕнчен, Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществинчен чечек кăшăлĕсем хураççĕ. Китай ĕçсыннисем Китай халăхĕн чи лайăх тусĕпе учителĕ Иосиф Виссарионович Сталин вилнĕ пирки чĕререн хурланаççĕ.

Зала халăх демократи çĕршывĕсен посольствисемпе миссийĕсен членĕсем пырса кĕреççĕ.

Демократиллĕ Корея Халăх Республикинчи Ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕпе правительствăран, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Верховнăй Халăх Пухăвĕн Президиумĕнчен чечек кăшăлĕсем хураççĕ. Чечек кăшăлĕ çине: «Мирлĕ пурнăçа юратакан мĕнпур халăхсен аслă учителĕпе тусне Иосиф Виссарионович Сталина», тесе çырнă.

Зала Венгрири ĕçсыннисен партийĕпе Венгри Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕнчен, Венгри Халăх Республикин, Чехословаки Республикин, Болгари Халăх Республикин, Польша Халăх Республикин посольствисенчен, Румыни Халăх Республикин правительствипе Румынири рабочисен партийĕн Центральнăй Комитечĕнчен, Румынири Аслă Наци Пухăвĕн Президиумĕнчен, Демократиллĕ Германи Республики правительствинчен, Германири Социалистсен пĕрлĕхлĕ партийĕн Центральнăй Комитетĕнчен, Демократиллĕ Вьетнам Республикинчи Ĕçлĕх партийĕпе правительствинчен, Албани Халăх Республикин миссийĕнчен, Монголи Халăх Республикин правительствипе Монголири Революциллĕ халăх партийĕн Центральнăй Комитетĕнчен чечек кăшăлĕсем илсе кĕреççĕ.

Чечек кăшăлĕсем çине çырнă сăмахсем çак çĕршывсенчи халăхсем вилĕмсĕр Сталина, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕпе чи лайăх тусне чĕререн юратса тав тунине кăтартаççĕ.

Тупăк умĕнче дипломатиллĕ корпус членĕсем — капитализмлă çĕршывсенчи правительствăсен Мускаври представителĕсем. Аргентина республики президентĕнчен Хуан Перонран, Аргентина республикин посолĕнчен Л. Браворан, Швейцари миссийĕнчен чечек кăшăлĕсем илсе кĕреççĕ.

Вĕçĕмсĕр хурлăхлă кĕвĕ янăрать. Кашни икĕ-виçĕ минутран хисеплĕ хурал улшăнса тăрать. Хисеплĕ хуралта Мускаври парти активĕн представителĕсем, рабочисем, колхозниксем, ученăйсем, писательсем, министерствăсен руководителĕсем, СССР Верховнăй Совечĕпе союзлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен депутачĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсем, Социализмлă Ĕç Геройĕсем, Совет Çарĕн Маршалĕсемпе генералĕсем, Тинĕс-Çар Флочĕн адмиралĕсем тăраççĕ. Траурлă вахтăра—Совет Союзĕн Геройĕ ятне виçĕ хутчен илнĕ сталинла соколсем Покрышкинпа Кожедуб, Скобельцынпа Опарин академиксем, Фадеевпа Сурков писательсем.

...Кăнтăрла иртни 4 сехет. И. В. Сталин тупăкĕ умне хисеплĕ хурала Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, Н. С Хрущев, Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, М. З. Сабуров, М. Г. Первухин, Н. М. Шверник юлташсем тăраççĕ.

Столицăри Сталин юлташ ячĕпе тăракан район делегацийĕ иртсе пырать. Çак районти ĕçсыннисем аслă çулпуçа СССР Верховнăй Советне, РСФСР Верховнăй Советне, Мускав Советне пĕр хут çеç мар суйланă. Сталин юлташ хăйĕн суйлавçисем умĕнче икĕ хутчен тухса каланă. Делегатсем хушшинче электрозаводри, инструментсем, машинăсем тăвакан заводсенчи стахановецсем. Вĕсенчен нумайăшĕ 1946 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнчи историллĕ пухура пулнă. Çак пухура Сталин юлташ коммунизм тумалли аслă программа çинчен каласа панă.

Хисеплĕ хурал татах та татах улшăнать. Хисеплĕ хуралта государство деятелĕсем, çÿçĕсем шуралнă ученăйсем, новатор-рабочисем, колхозниксем тăраççĕ. Çулпуç тупăкĕ умĕнче хисеплĕ хуралта паллă стахановкăсем Лилия Кононенкăпа Мария Рожнова, машинист-пятисотник Виктор Блаженов, чаплă токарь-скоростник Павел Быков, Мускав сывăхĕнчи «Борец» колхоз членĕ, Социализмлă Ĕç Геройĕ Кашкина юлташ тата ыттисем те тăнă.

Хисеплĕ хурала М. А. Суслов, Н. А. Михайлов, П. К. Пономаренко, С. Д. Игнатьев, А. Б. Аристов, Н. Н. Шаталин, М. Ф. Шкирятов, А. М. Пузанов, А. Г. Зверев юлташсем тăраççĕ.

Совет халăхĕ Сталин юлташа чăннипех вĕçĕмсĕр юратать. Анчах пуриншĕн те килсе тухнă хурлăх совет çыннисене пĕр-пĕринпе тата ытларах таччăн çыхăнтарчĕ, вĕсем партипе тата ытларах тăванланчĕç. Парти вĕсене Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви тавра пĕтĕçтернĕ. Партипе халăхăн пĕр тĕлев—Ленинпа Сталин ĕçне пирĕн çĕршывра коммунизм туллин çĕнтересси патне илсе çитересси пулать.

Колоннăллă залра вĕçĕмсĕр траурлă музыка кĕвви янраса тăрать.

Çĕрле. Çынсем çаплах вĕçĕмсĕр килсе тăраççĕ. Ригăран латыш халăхĕн делегацийĕ килсе çитнĕ. Зала республикăсенчи, крайсенчи, облаçсенчи тата пирĕн вĕçĕ-хĕррисĕр анлă тăван çĕршывăн районĕсенчи рабочисенчен, колхозниксенчен çĕнĕрен те çĕнĕрен чечек кăшăлĕсем илсе кĕреççĕ.

Çĕршыв аслă çулпуçпа сывпуллашать.

...Сурçĕр. Халăх халĕ те кăнтăрлахи пекех, ĕнерхи пекех, вĕçĕмсĕр килсе тăрать. Зала Молдави делегацийĕ пырса кĕрет. Ун хыççăн Украина делегацийĕ чĕрĕ чечексенчен çыхса тунă чечек кăшăлĕ илсе кĕрет. Хĕрлĕ лента çине ылтăн саспаллисемпе: «Аслă Сталина. Украина халăхĕнчен», тесе çырнă.

Хисеплĕ хурала каллех Иосиф Виссарионович Сталинăн боевой соратникĕсемпе ученикĕсем — Г. М. Маленков, Л. П. Берия, К. Е. Ворошилов, Н. С. Хрущев, Н. А. Булганин, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, М. З. Сабуров, М. Г. Первухин, Н. М. Шверник юлташсем тăраççĕ.

...Сурçĕр иртни виçĕ сехет. Совет çыннисем çаплах И. В. Сталин тупăкĕ умĕнчен иртеççĕ. (ТАСС).

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне
ССР Союзĕн Министрĕсен Советне
Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховнăй Совет Президиумне

Ленинградри тата областьри ĕçсыннисем Коммунистсен партийĕпе совет халăхĕн аслă çулпуçĕпе учителĕ Иосиф Виссарионович Сталин вилни çинчен пĕлтернине чунтан хурланса йышăнчĕç. Хаклă тата юратнă Иосиф Виссарионович вилни рабочисен, колхозниксен тата интеллигентсен чĕрине питех те ыраттарать. Пирĕн халăхăн мĕнпур çитĕнĕвĕсемпе çĕнтерĕвĕсем Сталин ячĕпе çыхăннă. Сталин юлташăн ячĕ яланах совет çыннисемпе мĕнпур прогрессивлă этемлĕхĕн чи лайăх шанчăк-ĕмĕчĕсен символĕ пулнă. Сталин юлташ пирĕн çĕршыва мĕнпур йывăрлăхсемпе йывăр тĕрĕслÿсем витĕр çĕнтерÿллĕн илсе тухрĕ. Ленинград çыннисем çак çухатушăн хытă хурланаççĕ.

Революциллĕ Петроградăн мухтавлă историйĕ тата социализмла Ленинград строительстви пĕтĕмĕшпех Сталин юлташăн ячĕпе çыхăнса тăрать. Сталин юлташ Ленинграда икĕ хутчен çав тери пысăк хăрушлăхран, империалистла захватчиксем тапăннинчен çăлса хăварчĕ. Ленинград çыннисем çакна нихçан та манмĕç.

Сталин юлташ яланах тăрăшнипе тата питĕ пысăк пулăшу панипе Ленинград чечекленекен социализмла хула пулса тăчĕ. Облаçри колхозсем ÿссе тĕрекленчĕç, ĕçсыннисен пурнăçĕ лайăхланчĕ, культурăллă шайĕ ÿсрĕ.

Ленинград хулинчи тата облаçри ĕçсыннисем Коммунистсен партийĕн ленинла-сталинла Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçĕç, коммунизмлă общество тума, Совет государствин шалти тата тулашри тăшманĕсене хирĕç кĕрешме хăйсен пĕтĕм вăйне хурĕç, политика енĕпе сыхăлăха вĕçĕ-хĕррисĕр ÿстерĕç, пирĕн çĕршывăн оборона хăватне тĕреклетсе пырĕç. Ленинградри тата облаçри ĕçсыннисем миршĕн, социализмпа демократишĕн кĕрешекен мĕнпур çĕршывсенчи ĕçсыннисемпе пирĕн çĕршыври халăхсем хушшинчи тăванла туслăха малалла та çирĕплетсе пырĕç.

ĔÇСЫННИ ДЕПУТАЧĔСЕН ЛЕНИНГРАД ОБЛАСТЬ СОВЕЧĔ.

ĔÇСЫННИ ДЕПУТАЧĔСЕН ЛЕНИНГРАД ХУЛА СОВЕЧĔ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне
ССР Союзĕн Министрĕсен Советне
СССР Верховнăй Совет Президиумне

Азербайджанри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, Азербайджан ССР Министрĕсен Совечĕ тата Верховнăй Совет Президиумĕ этемлĕхĕн аслăран та аслă генийĕ, пирĕн партипе совет халăхĕн, пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен аслă çулпуçĕпе учителĕ—Иосиф Виссарионович Сталин вилнĕшĕн республикăри коммунистсемпе мĕнпур ĕçсыннисем çав тери хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Ĕçсыннисен аслă çулпуçĕпе учителĕн Сталин юлташăн ячĕ Азербайджан халăхĕшĕн вĕçĕ-хĕррисĕр хаклă. Сталин юлташ партин Азербайджан организацине—пирĕн партин чи вăтă та шанчăклă отрячĕсенчен пĕрине туса çитĕнтернĕ. Бакури революциллĕ кĕрешĕве хăй ертсе пырса, Сталин юлташ Азербайджанри пролетариата тата пĕтĕм ĕçсыннисене интернационализм майлă, халăхсен тăванлă туслăхĕ майлă воспитани панă, вĕсене рабочи класăн мĕнпур тăшманĕсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленĕ. Социальнăй тата нациллĕ пусмăрлăхран ирĕке тухнăшăн, экономикăпа культура аталанăвĕшĕн Азербайджан халăхĕ Иосиф Виссарионович Сталина вăл ăслăн ертсе пынăшăн, куллен тимлĕн те атте пек тăрăшнăшăн тав тума тивĕçлĕ.

Çак хурлăхлă кунсенче Азербайджанри ĕçсыннисем, мĕнпур совет çыннисем пекех, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн ленинла-сталинла Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçеççĕ. Азербайджанри ĕçсыннисем Коммунистсен партине—пирĕн мĕнпур çĕнтерÿсен хавхалантаракан̆ĕпе организаторне вĕçĕ-хĕррисĕр шанса тата парăнса тăраççĕ.

Партин Азербайджан организацийĕ, мухтавлă сталинла традицисене тĕрĕс тытса, малашне те пирĕн парти пĕрлĕхне чыслăн сыхласа тăрĕ, массăсемпе çыхăнса тăрассине тĕреклетсе пырĕ, рабочисене, колхозниксемпе интеллигентсене революциллĕ сыхăлăх енĕпе питех те тимлĕ пулма, халăхсен туслăхне тĕреклетме, Коммунистсен партине, пирĕн советлă аслă Тăван çĕршыва юратма тата парăнса тăма воспитани парса пырĕ.

АЗЕРБАЙДЖАНРИ КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ.

АЗЕРБАЙДЖАН ССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ.

АЗЕРБАЙДЖАН ССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне
ССР Союзĕн Министрĕсен Советне
СССР Верховнăй Совет Президиумне

Карело-Финн Советлă Социализмлă Республикинчи коммунистсемпе мĕнпур ĕçсыннисем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, хамăрăн генилле çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Иосиф Виссарионович Сталин вилни çинчен пĕлтернĕ хыпара илнĕ хыççăн чун-чĕререн хурланаççĕ.

Коммунистсен партийĕ, Сталин юлташ яланах тăван атте пек тăрăшнипе карело-финн халăхĕ хăйĕн крайĕ хуçалăх тата культура енĕпе кая юлнине пĕтерчĕ, ăна экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен аталаннă социализмлă республика туса хучĕ. Карело-Финн Совет Республикинчи ĕçсыннисем Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе тунă мĕнпур çитĕнÿсем Сталин юлташ ячĕпе тачă çыхăнса тăраççĕ.

Çак хурлăхлă кунсенче эпир Карело-Финн Совет Республикинчи парторганизацин, рабочисен, колхозниксен тата интеллигентсен ячĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне тата Совет правительствине çапла шантарса калатпăр: карело-финн халăхĕ Ленинпа Сталин туса хунă тата воспитани панă Коммунистсен партийĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçсе тăрĕ, пирĕн çĕршывра коммунизм тăвас аслă ĕçе пурнăçлама хăйĕн мĕнпур вăйĕсене пухĕ.

КАРЕЛО-ФИНН ССР-ĕнчи КОММУНИСТСЕН ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНĂЙ КОМИТЕЧĔ.

КАРЕЛО-ФИНН ССР МИНИСТРĔСЕН СОВЕЧĔ.

КАРЕЛО-ФИНН ССР ВЕРХОВНĂЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔ.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне
ССР Союзĕн Министрĕсен Советне
ССР Союзĕн Верховнăй Совет Президиумне

Профсоюзсен Чăваш область совечĕпе профсоюзсен обкомĕсем Чăваш республикинчи мĕнпур профсоюз членĕсен ячĕпе Ленинăн ĕçне малалла генилле туса пыракан, халăхсен аслă çулпуçĕпе учителĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ вилнĕ пирки чун-чĕререн хурланни çинчен пĕлтереççĕ.

Хăйĕн пĕтĕм пурнăçне коммунизм тăвас аслă ĕçе панă Сталин юлташ вилни партишĕн, Совет çĕршывĕнчи тата пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисемшĕн питĕ йывăр çухату пулса тăрать.

Сталин юлташăн ячĕ пирĕншĕн питех те хаклă.

Çак хурлăхлă кунсенче эпир Чăваш республикинчи профсоюз организацийĕсен работникĕсем тата совет профсоюзĕсен мĕнпур членĕсем Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ тата Совет Союзĕн Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçетпĕр. Коммунизм тăвас аслă ĕçе пурнăçлама хамăрăн мĕнпур вăя тата творчествăллă хастарлăха мобилизацилеме, хамăрăн революциллĕ сыхăлăха тата çÿлерех çĕклеме тупа тăватпăр.

Сывă пултăр Марксăн—Энгельсăн—Ленинăн—Сталинăн пурне те çĕнтерекен аслă вĕрентĕвĕ!

Сывă пултăр пирĕн социализмлă хăватлă Тăван çĕршыв!

Сывă пултăр пирĕн паттăр совет халăхĕ!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен аслă партийĕ!

ЧĂВАШОБЛПРОФСОВЕТ.

Сталин ĕмĕр-ĕмĕр пурăнĕ

КИЕВ, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). «Ленинская кузница» заводăн инструментальнăй цехне литейщиксем, сборщиксем, токарсем, фрезеровщиксем, инженерсем, служащисем пухăннă. Трибуна патĕнче çÿлте юратнă çулпуçăн—Иосиф Виссарионович Сталинăн портречĕ. Портрет тавра хура хăюпа тыттарнă. Цехăн пысăк çуртĕнче халăх туллиех.

Хурлăхлă пухăва заводри профсоюз комитечĕн председателĕ А. А. Монета уçать. Вăл партин Киев хула комитечĕн секретарьне М. С. Синица юлташа сăмах парать.

— Пирĕн аслă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр, ĕçсыннисен хаклă ашшĕ тата тусĕ Иосиф Виссарионович Сталин вилсе кайрĕ,—тесе калать Синица юлташ.—Сталин юлташ вилни пирĕн партишĕн, совет халăхĕшĕн, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхшĕн калама çук пысăк çухату.

Çак кунсенче пирĕн çĕршыври пур халăхсем те партин ленинла-сталинла Центральнăй Комитечĕ ертсе пынипе халăхсен аслă çемйинче тата тачăрах пĕтĕçеççĕ. Рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем, пĕрлĕхлĕ те çирĕп хăватлă пулса тата сыхă тăрса, хăйсен пĕтĕм вăй-хăватне хамăр çĕршывра коммунизм туса çитерме хураççĕ.

Трибуна çинче—заводри чи лайăх мастер Н. С. Карпенко. Вăл çапла калать:

— Пирĕншĕн калама çук пысăк хурлăх килсе тухрĕ. Анчах пирĕн, коммунистсем пек пулса, хурлăха чăтса иртермелле, хамăр ретсене тата ытларах пĕтĕçтермелле. Эпир çакна пĕлсе тăратпăр: пире Ленинпа Сталин туса кĕрешÿре çирĕплетнĕ парти малалла ертсе пырать, çак парти совет халăхĕн тăван партийĕ, вăл Ленинпа Сталин вĕрентĕвĕн вилĕмсĕр идейисемпе хĕçпăшалланнă.

Инженер-конструктор И. П. Пашута, стахановка Т. С. Верцюк, заводри комсомол комитечĕн секретарĕ В. Григорьев сăмах тухса калаççĕ.

— Сталин ячĕ пирĕншĕн, совет çамрăкĕсемшĕн,—тесе калать Григорьев юлташ,—калама çук хаклă, мĕншĕн тесен Сталин юлташ пире ырă пурнăç тума, хаваслă ĕçлесе пурăнма çул уçса пачĕ. Эпир хаклă çулпуç хушса хăварнисене пурнăçлама тупа тăватпăр! Ленин—Сталин ялавне эпир коммунизм çĕнтерĕвĕ патне илсе çитерĕпĕр!

Сталинла премии лауреачĕ Платон Воронько поэт хурлăхлă пухура çапла каланă:

— Çак йывăр кунсенче эпир Коммунистсен партийĕпе пĕрле. Ку партие Ленинпа пĕрле Сталин юлташ пăхса ÿстернĕ. Эпир Коммунистсен партине вĕçĕмсĕр шанса тăратпăр. Вăл пире Сталин юлташ кăтартса панă çулпа этемлĕхĕн телейлĕ пурнăçĕ патне, коммунизм патне илсе пырать.

«Ленинская кузница» заводри рабочисем, инженерсем, техниксем тата служащисем Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет правительствине ярса пама çыру йышăннă. Вĕсем хăйсен çырăвĕнче Центральнăй Комитетпа Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçме, социализмлă Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн, совет халăхĕн ырлăхĕшĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеме, хамăр çĕршывра коммунизм туса çитерессишĕн пĕтĕм вăй-хăватпа ĕçлеме пулаççĕ.

Аслă Сталина ĕмĕрлĕхе мухтав

ПЕТРОЗАВОДСК, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС): Совет халăхĕ аслă Сталина вĕçĕ-хĕррисĕр юратать. Вăл вилнине тÿссе ирттерме питех те йывăр. Аслă çыннăн чĕри тапма чарăнчĕ, этемлĕх генийĕ сÿнчĕ, халăхсен ашшĕ тата тусĕ, Ленинăн вилĕмсĕр ĕçне малалла туса пыракан — Иосиф Виссарионович Сталин вилсе кайрĕ.

Карело-Финн ССР-ĕнчи хуласемпе вăрманти поселоксенче, колхозлă ялсемпе пулăçсен поселокĕсенче траур.

Фабрикăсемпе заводсенчи, вăрман пункчĕсенчи стахановецсем, пулăçсемпе колхозниксем, инженерсемпе ученăйсем хурлăхлă митингсенче, аслă Сталинăн çутă ятне чĕрере тытса, Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçме, сыхăлăха вăйлатма, ĕçри çитĕнÿсене ÿстерме тупа тăваççĕ.

Çĕршыври пĕрремĕш питех те пысăк гидросооружени—Сталин ячĕпе тăракан Шурă тинĕс—Балтика каналĕ çинче ĕçлекенсем 1933 çулта Иосиф Виссарионович Сталин тата унăн çывăх соратникĕсем С. М. Кировпа К. Е. Ворошилов канал çине пыни çинчен уйрăмах ăшă сăмахсемпе асăнаççĕ.

— Иосиф Виссарионович пирĕнпе, простой рабочисемпе, ашшĕ хăйĕн ывăлĕсемпе каласнă пек, каласрĕ,—тесе аса илет канал çинчи пĕрремĕш шлюз начальникĕ Чуркин юлташ.

Инçетри Калевала районĕнчи çитмĕл çулхи юмахçă Е. Хĕмяляйнен çапла каланă:

— Юратнă Сталин çинчен эпир чи лайăх юрăсем хыврăмăр. Эпĕ, ватă юмахçă, чунтан-чĕререн тухакан сăмахсемпе ун çинчен, чĕрĕ çын çинчен каласнă пекех, татах та татах калатăп. Аслă Сталин пирĕнпе, халăхпа пĕрле, ĕмĕрех пурăнĕ.

Ладвински вăрманпромхозри тракторист-стахановец Градусов юлташ çапла калать:

— Юратнă çулпуç тата учитель пирĕнтен уйрăлчĕ, анчах вăл пирĕн чĕресенче ĕмĕрех пурăнĕ. Хамăрăн пĕрлĕхе тата ытларах çирĕплетĕпĕр, партин Центральнăй Комитечĕпе Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçĕпĕр. Тăван çĕршыв ырлăхĕшĕн тăвакан ĕçре пирĕн лозунг çакăн пек: çĕршыва ытларах йывăç хатĕрлесе памалла!

Карело-Финн ССР-ĕнчи халăх, пĕтĕм Совет халăхĕ пекех, аслă Сталинăн çутă сăнарĕпе хавхаланса, çак кунсенче тăрăшса ĕçлет.

Аслă çулпуç хушса хăварнисене пурнăçа кĕртĕпĕр

ТАХИА-ТАШ, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Юратнă çулпуçăмăрпа учителĕмĕр Сталин юлташ вилни çинчен пĕлтернĕ хыпар Кара-Кумри аслă стройкăра ĕçлекенсен чĕрине хытă ыраттарать. Тахиа-Таш гидроузелне тунă çĕрте ĕçлекен пиншер строительсем хурлăхлă митинга пухăннă.

«Средазгидрострой» политотделĕн начальникĕ Глущенко юлташ сăмах тухса калать. Вăл, Иосиф Виссарионович Сталин ячĕ совет çыннисемшĕн тата пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхшĕн хаклă пулни çинчен астутарса, строительсене Ленин—Сталин партийĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçме, сыхăлăха ÿстерме, хамăр çĕршывра коммунизм туса çитерессишĕн хăватлăрах кĕрешме чĕнет.

Экскаваторщик Петр Шендрик çапла калать:

— Пирĕн халăхшăн питĕ пысăк çухату пулчĕ. Тăван Сталин юлташăн чĕри тапма чарăнчĕ. Анчах аслă çулпуçăн вилĕмсĕр ĕçĕ миллионшар совет çыннисен, пирĕн ретри кашни çын чĕринче пурăнать. Сталин юлташăн тивĕçлĕ ученикĕсем пулăпăр тесе, Сталин кăтартса хăварнисене пĕтĕмпех пурнăçласа çитерĕпĕр тесе тупа тăватпăр!

Сталин юлташ пуçарнипе Туркменири тĕп канала тума тытăннă. Çак канал Кара-Кумри шывсăр çĕрсене чечекленекен уй-хирсемпе садсем туса хумалла. Аслă стройкăна срокчен туса пĕтерме тупа тăватпăр!

— Хаклă атте тата çулпуçăмăр аслă Сталин вĕрентнĕ пек ĕçлесе пурăнма тăрăшăпăр,—тесе калать скреперист Яков Медведев.— Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви шанчăклăн ертсе пынипе хамăрăн юратнă социализмлă Тăван çĕршывăн хăватне ÿстерсе пырар.

Трибуна çинче — çамрăк монтажник Евгений Дементьев. Вăл стройкăри комсомол комитечĕсене вунăшар çамрăк строительсем комсомола илме ыйтса заявлени пани çинчен пĕлтерет. Çак заявленисем пирĕн çамрăксем Коммунистсен партийĕ тавра тачăрах пĕтĕçме тăрăшнине, коммунизмшăн кĕрешес ĕçре активлăха ÿстерме хатĕр тăнине, аслă Сталинăн вилĕмсĕр идейисене пурнăçа кĕртессишĕн вăя шеллемесĕр ĕçлеме хатĕр тăнине кăтартса параççĕ.

Митингра пулнисем КПСС Центральнăй Комитечĕпе Совет правительствине ярса пама йышăннă çырура Ленин—Сталин партийĕн ĕçне малалла туса пыма тупа тăваççĕ.

Шахтерсен сăмахĕ

КЕМЕРОВО, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Кузбасри хуласемпе шахтерсен поселокĕсенче траур. Пур çĕрте те хурлăхлă митингсем пулса иртеççĕ.

«Ленинуголь» трестри Киров ячĕпе тăракан шахтăри горняксен хурлăхлă митингĕнче участок начальникĕ Фукалов юлташ сăмах каланă.

— Иосиф Виссарионович Сталин пирĕнтен уйрăлса кайни çинчен пĕлтерекен хыпар чĕрене ыраттарать, тет вăл. — Вăл совет халăхне, çил-тăвăлсемпе йывăрлăхсем витĕр, телейлĕ те савăнăçлă пурнăç патне илсе çитерчĕ. Çак хурлăхлă кунсенче эпир,—шахтерсем, коммунизм строительствинче вăя шеллемесĕр ĕçлеме пулатпăр.

Трибуна çинче — крепильщик Першин юлташ. Вăл, аслă Сталин вилнишĕн чунтан хурланни çинчен каласа, пысăкрах хăватпа ĕçлеме чĕнет.

Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Советне ярса панă çырура шахтăри горняксем Сталин юлташ кăтартса панисене пурнăçласшăн пысăк хăватпа кĕрешме тупа тăваççĕ.

ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ СТАЛИН

Сталин ӗҫӗсем вилӗмсӗр

Шупашкарти пир-авӑр фабрикинчи рабочисемпе служащисен, инженерсемпе техниксен хурлӑхлӑ митингӗ пулса иртрӗ.

Фабрика директорӗ Г. Н. Кулешов митинга уҫса Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн Председателӗн заместительне И. В. Заикин юлташа сӑмах парать.

— Эпир калама ҫук пысӑк хурлӑхлӑ хыпар илтӗмӗр,—тет Заикин юлташ. — Совет государствин никӗсне хывнӑ аслӑ ҫын, ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗн Председателӗ тата Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн Центральнӑй Комитечӗн Секретарӗ Иосиф Виссарионович Сталин пирӗнтен ӗмӗрлӗхех уйӑрӑлчӗ. Сталин юлташ вилӗмӗ пирӗн партишӗн, пӗтӗм совет халӑхӗшӗн тата тӗнчери мӗнпур прогрессивлӑ этемлӗхшӗн питех те пысӑк ҫухату пулса тӑрать. Эпир Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗпе Совет Правительстви тавра тата тачӑрах пӗрлешетпӗр. Производствӑра тата хастарлӑрах ӗҫлер, паха продукци туса кӑларар.

— Кашни ӗҫҫынни чӗринче пысӑк хурлӑх,—терӗ фабрикӑн главнӑй инженерӗ Ф. А. Пашков юлташ.—Аслӑ Сталин хӑйӗн кусӗсене хупрӗ. Пирӗн питӗ пысӑк инкеке ҫирӗппӗн чӑтса ирттерес пулать. Революциллӗ сыхӑлӑха ӳстерсе пырӑпӑр, партин Центральнӑй Комитечӗпе Совет Правительстви тавра тата тачӑрах пӗтӗҫӗпӗр.

З. И. Конушкина работница сӑмах илет:

— Сталин юлташ вилӗмне пула пирӗн чӗресене пырса пуснӑ питех те пысӑк хурлӑха сӑмахсемпе каласа пама май ҫук. Сталин вилчӗ пулин те унӑн вилӗмсӗр ӗҫӗсемпе вӗрентӗвӗ юлчӗҫ. Эпир стахановла ӗҫлесе, аслӑ Сталин кӑтартнӑ ҫулпа ҫирӗппӗн малалла утӑпӑр, Тӑван ҫӗршыв вӑй-хӑватне ӳстерӗпӗр.

Вӑл яланах пирӗнпе

КАНАШ. Чугун ҫул станцин хӗрлӗ кӗтесӗ. Стена ҫумӗнче аслӑ Сталинӑн пысӑк портречӗ. Ӑна йӗри-тавра хура пурҫӑн хӑю тытнӑ. Хӗрлӗ кӗтесре ҫара пуҫӑн тӑракан ҫынсем пурте ун ҫине куҫҫуль юхтарса пӑхаҫҫӗ.

— Сталин юлташ чӗри тапма чарӑнчӗ,—пӗлтерет партбюро секретарӗ А. Плотников юлташ.—Ку вӑл пирӗншӗн калама ҫук пысӑк ҫухату. Чугун ҫул ҫинче ӗҫлекенсен чи сывӑх тусӗ — Сталин вилчӗ пулсан та вӑл яланах пирӗнпе пӗрле пулӗ. Эпир вӑл вӗрентнӗ тӑрӑх ӗҫлесе коммунизм патне пырӑпӑр. Пурте пӗр ҫын пек, Сталин тупӑкӗ умӗнче, вӑл хушса хӑварнисене пурнӑҫласассишӗн кӗрешме, хамӑр хушӑмӑрти пӗрлӗхе ҫирӗплетме, сисӗмлӗхе ӳстерсе пыма тупа тӑватпӑр.

Ура ҫинче тӑракан ӗҫҫыннисем Сталин портречӗ ҫине пӑхса пуҫӗсене таяҫҫӗ.

— Патша саманинче ҫын ӗҫ вильӑхӗ выранӗнче пулнӑ,—тет станци начальникӗн помощникӗ С. Корыкин юлташ.—Сталин ҫынна ҫав тери хисеплене, хакланӑ. Вӑл тӑрӑшнипе чугун ҫул ҫинче ӗҫлекенсен пурнӑҫӗ калама ҫук лайӑхланчӗ. Вӗсене орденсемпе медальсем парса хисепleme, ватӑлсан пенси пама пуҫларӗҫ. Чугун ҫул ҫинче ӗҫлекенсем, вӑл пирӗншӗн тӑрӑшнине ӗмӗр-ӗмӗр манмӑпӑр. Унӑн ятне хамӑр чӗрере усрӑпӑр. Вӑл вӗрентнӗ пек ӗҫлесе пырӑпӑр.

— Сталин ертсе пынипе совет халӑхӗ социализм турӗ,—терӗ П Павлов составитель.—Сталинла пилӗкҫуллӑхсенче пирӗн ҫӗршыври чугун ҫул тӗпренех ҫӗнелсе улшӑнчӗ. Эпир чи вӑйлӑ чугун ҫуллӑ аслӑ держава пулса тӑтӑмӑр. Сталин юлташ панӑ техникӑпа тата лайӑхрах усӑ курса, коммунизм стройкисем валли груз турттармалли плана пур енӗпе те ирттерсе тултарма сӑмах паратпӑр. Сталин вилчӗ. Анчах унӑн ӗҫӗпе вӗрентӗвӗ пирӗ малашне те хавхалантарса тӑрӗ.

Сӗтел патне Н. Медведева тухса тӑчӗ.

— Радио хурлӑхлӑ хыпар илсе килчӗ. Сталин юлташӑн ӑшшӑн пӑхакан куҫӗсем хупӑнчӗҫ,—тет вӑл хурлӑхлӑ куҫӗсемпе Сталин портречӗ ҫине пӑхса тӑнӑ хыҫҫӑн.—Сталин юлташ совет хӗрарӑмӗсен юратнӑ ашшӗ пулнӑ. Вӑл тӑрӑшнипе хӗрарӑмсем пур ӗҫре те арҫынсемпе пӗр тан праваллӑ пулчӗҫ. Сталин юлташ нумай ачаллӑ хӗрарӑмсене пособи памалла, орденсемпе наградӑламалла турӗ, ача сачӗсемпе яслисем, консультацисем нумай уҫрӗ. Пирӗн ҫӗршыври пек телейлӗ хӗрарӑмсемпе ачасем ҫӗр ҫинче урӑх ниҫта та ҫук. Эпир унӑн асран кайми ӗҫӗсене нихҫан та манмӑпӑр. Партин Центральнӑй Комитечӗпе Совет Правительстви тавра пӗтӗҫсе, коммунизм патне утӑпӑр. Эпир Ленин—Сталин партине вӗҫӗ-хӗррисӗр ӗненетпӗр.

Сталин сӑнарӗ ӗмӗр-ӗмӗр чӗрере пулӗ

КАНАШ, мартӑн 8-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районти ялсемпе предприятисенче тата учрежденисемпе шкулсенче пуринче те хурлӑхлӑ митингсем пулса иртеҫҫӗ. Митингсенче ӗҫҫыннисем Иосиф Виссарионович Сталин юлташ вилнӗшӗн кулянни тата хӑйсем Ленин—Сталин партийӗпе Совет правительстви тавра пӗтӗҫсе, хамӑрӑн ҫӗршывра коммунизм туса ҫитерессишӗн ырми-канми ӗҫлеме хатӗрри ҫинчен пӗлтереҫҫӗ.

— Совет халӑхӗн калама ҫук пысӑк хурлӑх пулчӗ,—терӗ митингра МТС-ри трактор бригадин бригадирӗ А. Кузьмин юлташ.—Вӑл хурлӑха нимӗнпе те танлаштарма ҫук. Анчах эпир малашне те Сталин юлташ кӑтартнӑ ҫул-йӗртен пӗр пусӑм та пӑрӑнмӑпӑр. Пире халӑх интересӗсемшӗн кӗрешекен Коммунистсен партийӗ ертсе пырать.

Вӑрманта ӗҫлекенсен хурлӑхлӑ митингӗнче Н. Семенов инженер ҫапла каларӗ:

— Сталин юлташ вилни совет халӑхӗн, ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи прогрессивлӑ мӗнпур этемлӗхӗн чӗрине ыраттарать. Эпир малашне те коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн пӗтӗм вӑя парса ӗҫлӗпӗр, мир ҫӗнтерӗвӗшӗн кӗрешӗпӗр.

Митингсенче пулнӑ ӗҫҫыннисем Ленин—Сталин партийӗпе унӑн Центральнӑй Комитетне, Совет Правительствине вӗҫӗ-хӗррисӗр шаннине тата ӗненнине тулли кӑмӑлпа каласа параҫҫӗ Ҫӗршывшӑн йывӑр кунсенче парти, унӑн Центральнӑй Комитечӗ тавра тата тачӑрах пӗтӗҫме, Сталин хушса хӑварнӑ ӗҫсене вӗҫне ҫитиех пурнӑҫлама тупа тӑваҫҫӗ.

Кӗрешӳпе ӗҫре Сталин пек пулӑпӑр

ИШЛЕЙ, мартӑн 7-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Районти ӗҫҫыннисем, колхозниксемпе колхозницӑсем тата интеллигенци аслӑ ҫулпуҫӗн Иосиф Виссарионович Сталин юлташӑн чӗри тапма чарӑннишӗн пӗтӗм чун-чӗререн хурланаҫҫӗ, ҫавна май предприятисемпе учрежденисенче, шкулсемпе артельсенче — пур ҫӗрте те хурлӑхлӑ-траурлӑ митингсем пулса иртеҫҫӗ.

МТС-ра пулса иртнӗ митингра КПСС райком секретарӗ Димитриев юлташ Совет Союзӗнчи Коммунистсен Партийӗн Центральнӑй Комитечӗпе ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗ тата СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ вилни ҫинчен пӗлтернине вуласа пачӗ. Ҫак хурлӑхлӑ хыпара илтсен, митингра пулнисем пурте ура ҫине тӑрса, Сталин юлташа хисеплесе пуҫа тайса тӑраҫҫӗ.

Митингра пулнӑ юлташсем, пӗрин хыҫҫӑн тепри сӑмах каласа, Тӑван ҫӗршывшӑн тата тӗнчери ирӗклӗхе юратакан этемлӗхшӗн питӗ пысӑк хурлӑх килсе тухни ҫинчен калаҫҫӗ.

6-мӗш трактор бригадин бригадирӗ Т. Ефимов юлташ митингра ҫапла каларӗ:

— Пире аслӑ ҫулпуҫ Сталин юлташ телейлӗ те савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ туса пачӗ. Пирӗн мӗнпур ӳсӗмсемпе ҫитӗнӳсем Сталин юлташӑн аслӑ ячӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Сталин юлташӑн чӗри тапма чарӑнни пирӗншӗн ҫав тери йывӑр хурлӑх пулса тӑрать. Анчах та эпир пуҫа усса лармӑпӑр, пирӗн кӗрешӗве Сталинӑн генийлӗ ӗҫӗсем ӗмӗр-ӗмӗрех ҫутатса тӑрӗҫ. Эпир татах та хастарлӑрах ӗҫлесе, Тӑван ҫӗршыва тӗреклетессишӗн тӑрӑшӑпӑр.

Иван Яруткин механик хумханса ҫапла калать:

— Эпир пурте Сталин юлташ ӳстерсе ҫитӗнтернӗ ҫынсем. Пире Сталин юлташ коммунизмшӑн вӑя шеллемесӗр ӗҫлеме вӗрентнӗ. Кӗрешӳпе ӗҫре Сталин пек ҫирӗп пулӑпӑр.

Карл Маркс ячӗпе тӑракан колхозри хурлӑхлӑ митинга колхоз председателӗ Г. Херсонов юлташ уҫрӗ.

Ватӑ колхозник В. Арсентьев митингра ҫапла каларӗ:

— Сталин юлташ вилни пирӗншӗн калама ҫук пысӑк та йывӑр хурлӑх. Пирӗн колхозлӑ пурнӑҫ Сталин юлташ ячӗпе ҫыхӑнса тӑрать. Ҫак йывӑр кунсенче эпир тата хастарлӑрах ӗҫлемелле. Пире малашне те Сталинӑн ырӑ та ҫутӑ ячӗ ӗҫре хавхалантарса пырӗ.

65 ҫулхи К. Артемьев, аслӑ конюх пулса ӗҫлекен колхозник, митингра ҫапла каларӗ:

— Аслӑ Сталин юлташ вилни совет ҫӗршывӗнчи ӗҫҫыннисемшӗн ҫеҫ мар тата мӗнпур тӗнчери ӗҫҫыннисемшӗн те пысӑкран та пысӑк ҫухату пулса тӑрать. Пире Сталин юлташӑн генийлӗ сӑнарӗ ӗмӗр-ӗмӗрех вӑй парса тӑрӗ, унӑн вилӗмсӗр ячӗ кашни ӗҫҫынни чӗринче яланах пурӑнӗ.

Совет студенчӗсем хурланса пуҫ таяҫҫӗ

Чӑвашсен государство педагогика институтӗнчи преподавательсемпе служащисен тата студентсен хурлӑхлӑ митингне уҫса партбюро секретарӗ М. Гришин юлташ ҫапла каларӗ:

— Ленин соратникӗн тата унӑн ӗҫне генилле малалла туса пыраканӑн, Коммунистсен партийӗпе совет халӑхӗн аслӑран та аслӑ ҫулпуҫӗн, учителӗн—Иосиф Виссарионович Сталинӑн чӗри тапма чарӑнчӗ. Сталин ячӗ пирӗншӗн калама ҫук хаклӑ. Эпир ӑна нихҫан та манас ҫук!

Институт директорӗ К. Евлампьев юлташ сӑмах илет.

— Сталин юлташ пирӗнтен уйрӑлса кайни—пирӗн партипе совет халӑхӗшӗн тата пӗтӗм тӗнчери прогрессивлӑ этемлӗхшӗн калама ҫук пысӑк ҫухату,—терӗ вӑл.—Тӑван партипе правительство тавра тата тачӑрах пӗрлешӗпӗр.

1918 ҫултанпа Ленин—Сталин партийӗн ретӗнче тӑракан Н. Буркин доцент ҫапла каларӗ:

— 1924 ҫулта аслӑ Ленин вилчӗ. Ун чухне пӗтӗм халӑх хурлӑхӗ мӗн тери пысӑк пулнине паянхи кун пек лайӑх астӑватӑп. Пирӗн партишӗн, мӗнпур ӗҫҫыннисемшӗн тепӗр пысӑк ҫухату пулчӗ—юратнӑ ҫулпуҫӑмӑрпа учителӗмӗр Сталин юлташ хӑйӗн куҫӗсене хупрӗ. Пирӗн тивӗҫ—тата лайӑхрах ӗҫлесси, вӗренесси.

— Пирӗнтен нумайӑшӗ Сталина курман. Анчах вӑл яланах пирӗнпе пӗрле, сывӑхра пулнӑ,—терӗ институтри ВЛКСМ комитечӗн секретарӗ В. Чинаев юлташ.

Вӗренӳ отличницин, историпе филологи факультетӗнче IV-мӗш курсра вӗренекен Зинаида Мишина сӑмах илет.

— Сталин ячӗ пирӗншӗн питех те хаклӑ,—терӗ вӑл.—Ӑна пӗлмен ҫын тӗнчере ҫук. Тин калаҫма вӗренекен ача чи малтанах икӗ сӑмах: «Анне», «Сталин» сӑмахсене калама тытӑнать. Сталин ячӗ Ленин ячӗ пекех пирӗн чӗресенче ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнӗ.

Юлашкинчен политэкономи преподавателӗ Я. Железнов юлташ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл КПСС Центральнӑй Комитетне телеграмма яма сӗнӳ пачӗ. Хурлӑхлӑ митинг пӗр кӑмӑллӑ пулса ун сӗнӗвне йышӑнчӗ.

— Эпир Ленин—Сталин партийӗ тавра тата тачӑрах пӗтӗҫсе тӑратпӑр, хамӑрӑн пӗтӗм вӑй-хӑвата тата пӗлӗве коммунизм обществи тунӑ ҫӗре паратпӑр, революциллӗ сыхӑлӑха ӳстеретпӗр,—тенӗ телеграммӑра.

Институт коридорӗнче И. В. Сталинӑн пысӑк портретне вырнаҫтарнӑ. Портрета хура лента тыттарса ҫавӑрнӑ, чечексемпе илемлетнӗ. Унта студентсем ирӗн-каҫӑн хисеплӗ хуралта тӑраҫҫӗ.

Колхозниксен чи сывӑх тусӗ

ЕТӖРНЕ, **(Телефонпа).** Районти учрежденисемпе предприятисенче тата колхозсенче хурлӑхлӑ митингсем пулса иртеҫҫӗ. Ҫав митингсенче ӗҫҫыннисем хӑйсен чи юратнӑ учителӗпе ҫулпуҫне хаклӑ Иосиф Виссарионович Сталина вӗҫӗ-хӗррисӗр юратса асӑнни ҫинчен каласа, вӑл пуҫарнӑ ӗҫе малалла пурнӑҫласа пыма тупа тӑваҫҫӗ.

«Правда» колхозра колхозниксемпе колхозницӑсен тата ялти интеллигентсен хурлӑхлӑ митингӗнче колхоз председателӗ И. Николаев юлташ ҫапла каларӗ:

— Пирӗн ҫӗршыври пӗтӗм халӑхшӑн калама ҫук пысӑк хурлӑх килсе тухрӗ. Эпир, колхозниксем, пире партипе правительство, аслӑ Сталин мӗн тери пысӑк телей, пуян та культурӑллӑ пурнӑҫ туса панине лайӑх куратпӑр. Совет влаҫӗ ҫулӗсенче пирӗн ял сӑн-сӑпачӗ пӗтӗмӗшпех улшӑнса ҫӗнелчӗ. Парти, Сталин юлташ куллен тӑрӑшнипе кӑна пирӗн ялта ватам шкул, клуб, библиотека уҫрӗҫ. Колхозлӑ ял ӗҫченӗсем тулӑх пурнӑҫпа пурӑнакан пулчӗҫ. Аслӑ Сталин ҫирӗп тытса пыракан наци политики ҫеҫ чӑвашсене, пирӗн пек вак халӑхсене, ҫакӑн пек ирӗклӗ пурнӑҫ пачӗ. Аслӑ Сталин ертсе пынипе этемлӗхе фашизм пусмӑрӗнчен ҫӑлса хӑварнӑ. Пирӗн мухтавлӑ ҫӗршыв малалла, коммунизм патнелле пырать. Ҫак вӑхӑтра юратнӑ ҫулпуҫ пирӗнтен уйрӑлчӗ. Анчах унӑн ӗҫӗсене халӑхран нихҫан та, никам та уйӑраймӗ.

Колхозри паллӑ доярка Ю. Охтярова юлташ пирӗн партипе правительство, аслӑ Сталин ӗҫхӗрарӑмӗсен пурнӑҫне лайӑхлатассишӗн чӗререн тӑрӑшни ҫинчен каларӗ.

— Пирӗн ҫӗршывра, партипе правительство, аслӑ Сталин тӑрӑшнипе, ӗҫхӗрарӑмӗсене калама ҫук пысӑк правӑсем панӑ. Эпир ҫав правӑсене Сталин панӑ правӑсем тетпӗр.

Хаклӑ ҫулпуҫӑмӑр И. В. Сталин вӑхӑтсӑр вилсе кайни кашни ӗҫхӗрарӑмӗшӗн калама ҫук пысӑк хурлӑх. Ҫӗршывшӑн ҫак йывӑр кунсенче эпир пӗтӗм шухӑш-кӑмӑлсемпе, пӗтӗм чӗрепе хамӑрӑн коммунистсен партийӗпе пӗрле, юратнӑ правительствӑпа пӗрле, ун тавра ҫирӗп пӗтӗҫсе ӗҫлеме тупа тӑватпӑр.

Тӑрӑшса ӗҫлеме сӑмах параҫҫӗ

СӖНТӖРВӐРРИ, мартӑн 7-мӗшӗ. **(Телефонпа).** Рабочисем, служащисем, интеллигентсем, колхозниксем Коммунистсен партийӗн, совет халӑхӗн, прогрессивлӑ пӗтӗм этемлӗхӗн аслӑ ҫулпуҫӗ тата учителӗ Иосиф Виссарионович Сталин вилнӗ пирки хытӑ хурланаҫҫӗ. Предприятисен, учрежденисен, ӗҫҫыннисен ҫурчӗсем ҫинче—йӗри-тавралла хура хӑю тытнӑ хӗрлӗ ялавсем. Пур ҫӗрте те хурлӑхлӑ митингсем пулса иртеҫҫӗ.

Судоверфьре ӗҫлекенсен митингӗнче партин Сӗнтӗрвӑрри райкомӗн секретарӗ Ф. Романов юлташ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл хамӑрӑн юратнӑ ҫулпуҫӑмӑрпа учителӗмӗр Сталин юлташ вилнипе совет халӑхӗ пысӑк ҫухату тӳсни ҫинчен, совет ҫыннисем малашне те коммунизм тӑвассишӗн пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлеме хатӗр пулни ҫинчен каласа пачӗ. Митингра рабочисемпе служащисем сӑмах тухса каларӗҫ. Вӗсем ӗҫҫыннисене Коммунистсен партийӗпе Совет Правительстви тавра тачӑ пӗтӗҫме чӗнчӗҫ. Митингра пулнӑ рабочисемпе служащисем, инженерсемпе техниксем производство планӗсене тултарас тӗлӗшпе хӑйсем ҫине ҫӗнӗ пысӑк обязательствӑсем илчӗҫ, политикӑллӑ сыхӑлӑха ӳстерме пулчӗҫ.

«Портной» артельте пулнӑ хурлӑхлӑ митингра цех заведующийӗ Грободелова юлташ сӑмах тухса каларӗ.

— Аслӑ ҫулпуҫ тата учитель Иосиф Виссарионович Сталин вилни — пирӗншӗн питӗ пысӑк ҫухату,—терӗ вӑл.—Хамӑр ҫӗршывра коммунизм тӑвас тӗлӗшпе Сталин юлташ палӑртнӑ программӑна пурнӑҫа кӗртессишӗн эпир хамӑр вӑйсене хӗрхенмесӗр, хамӑр вӑйсене темиҫе хут ӳстерсе ӗҫлӗпӗр.

Хулари вӑтам шкулти учительсемпе вӗренекенсем хурлӑхлӑ митингра хӑйсемшӗн телейлӗ те ҫутӑ пурнӑҫ туса панӑ Сталин юлташ вилнишӗн хытӑ хурланнине палӑртрӗҫ. Иосиф Виссарионович Сталинӑн ҫутӑ та асран кайми сӑнарӗ ҫамрӑксен чӗринче ӗмӗр-ӗмӗр пурӑнать.

Паникассинчи «Коммунизм» колхоз членӗсен митингӗнче колхоз председателӗн заместителӗ Андреев юлташ ҫапла каларӗ:

— Сталин юлташ вилни—пӗтӗм прогрессивлӑ этемлӗхшӗн пысӑк ҫухату. Пӗтӗм тӗнчери миршӗн ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешнӗ Сталин юлташӑн ҫутӑ сӑнарӗ ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинчи мӗнпур ӗҫҫыннисене миршӗн, демократишӗн, социализмшӑн кӗрешме хавхалантарӗ, пирӗн ҫӗршыври ӗҫҫыннисемшӗн коммунизмлӑ общество тӑвас ӗҫре аслӑ тӗслӗх пулӗ.

КПСС Центральнӑй Комитечӗпе Совет Правительстви тавра тачӑрах пӗтӗҫме тупа тӑваҫҫӗ

Атӑл леш енчи торфопредприятийӗн клубӗ. Кунта халӑх тӑп-тулли. Стена ҫинче Иосиф Виссарионович Сталин юлташӑн портречӗ. Хурлӑхла митинга рабочисем, инженерсемпе техниксем, служащисем, кил хуҫи хӗрарӑмӗсем, пенсионерсем пухӑннӑ. Партбюро секретарӗ Д. Никитина юлташ Чӑваш АССР Министрӗсен Совечӗн председатель заместительне Д. Полукаров юлташа сӑмах парать. Полукаров юлташ КПСС Центральнӑй Комитечӗ, СССР Министрӗсен Совечӗ тата СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ партин мӗнпур членӗсене, Совет Союзӗнчи мӗнпур ӗҫҫыннисене чӗнсе каланине вуласа панине пурте, пуҫӗсене усса, тимлӗн итлеҫҫӗ.

Ун хыҫҫӑн парти членӗ, пӑравус деповӗнче дежурнӑй пулса ӗҫлекен Н. Бурденкова юлташ сӑмах илет. Вӑл хумханса Сталин юлташ вилни партишӗн, Совет ҫӗршывӗнчи тата пӗтӗм тӗнчери ӗҫҫыннисемшӗн пысӑкран та пысӑк йывӑр ҫухату пулса тӑни ҫинчен калать.

65 ҫулхи слесарь Н. Шатохин юлташ ҫапла калать:

— Владимир Ильич Ленин вилнӗ хыҫҫӑн унӑн сывӑх тусӗ, соратникӗ Иосиф Виссарионович Сталин пире ҫӗнтерӳрен ҫӗнтерӳ патне илсе пычӗ, совет халӑхӗ валли пуян, культурӑллӑ пурнӑҫ туса пачӗ.

Шатохин юлташ коллектива хӑйӗн творчествӑллӑ хӑватне вӑйлатма, государство планӗсене чыслӑн пурнӑҫласа пыма чӗнсе калать.

Митингра пӑравус машинисчӗ Н. Грунин юлташ, предприяти директорӗ Н. Грибов юлташ тухса каларӗҫ.

Митинг хупӑннӑ. Анчах нумайӑшӗ клубран тухмаҫҫӗ. Кашнийӗн чӗри хытӑ ыратать, кашни Иосиф Виссарионович Сталин портречӗ ҫине салхуллӑн пӑхать, КПСС Центральнӑй Комитечӗпе Совет Правительстви тавра тагах та тачӑрах пӗтӗҫсе тӑма тупа тӑвать.

Сталин идейисем пурнӑҫланаҫҫӗ

Ял тунсӑхласа хурланать. Мӗнпур колхозниксемпе колхозницӑсен чи сывӑх та аслӑ тусӗ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ вилсе кайни ҫинчен пӗлтернӗ йывӑр хыпар чун-чӗрене ыраттарать.

Ҫак хурлӑхлӑ кунсенче пирӗн ҫӗршыври пур халӑхсемпе пӗрле ял ӗҫченӗсем те аслӑ тӑванла ҫемьере татах та тачӑрах пӗтӗҫеҫҫӗ. Коммунистсен партине вӗҫӗ-хӗррисӗр шанса тӑнине тата хӗрӳллӗн юратнине кӑтартса параҫҫӗ.

Республикӑра малта пыракан «Гвардеец» колхоз. Колхоз клубӗ умӗнче Иосиф Виссарионович Сталин юлташӑн пысӑк портречӗ, ӑна йӗри-тавра хура лента тыттарса тухнӑ, икӗ енче траурлӑ хура лента тыттарса тухнӑ ялавсем усӑнса тӑраҫҫӗ. Шкулпа магазин умӗнче те, колхозниксен килӗсем патӗнче те—хура лента тыттарса ҫавӑрнӑ ялавсем.

Мартӑн 6-мӗшӗнче каҫхине «Гвардеец» колхоз членӗсем, коммунистсемпе комсомолецсем, шкулти учительсем хурлӑхлӑ митинга пухӑнчӗҫ.

Совет Союзӗнчи Коммунистсен Партийӗн Центральнӑй Комитечӗ, ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗ тата СССР Верховнӑй Совет Президиумӗ 1953 ҫулхи мартӑн 5-мӗшӗнче партин мӗнпур членӗсене, Совет Союзӗнчи мӗнпур ӗҫҫыннисене чӗнсе каланине ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул директорӗ В. Кузнецов юлташ вулать.

Клубра питӗ шӑп. Ку шӑплӑхра ҫынсем ассӑн сывласа илни уҫӑмлӑн илтӗнет. Колхозниксемпе колхозницӑсем, мӗнпур ял ҫыннисем хурланнине ниепле сӑмахсемпе те каласа пама ҫук.

Акӑ, трибуна умне пӗрин хыҫҫӑн тепри харпӑр хӑй шухӑшӗсене пӗлтерме хӑпараҫҫӗ. Совет халӑхӗн аслӑ ҫулпуҫӗпе учителӗ Иосиф Виссарионович Сталина асӑнса колхозри парторганизаци секретарӗ Н. Горшков, колхозник Н. Рыбаков, комсомолец Г. Медведев, профсоюз членӗ А. Рехметов юлташсем чунтан-чӗререн хурланса сӑмах калаҫҫӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем хурланаҫҫӗ. Анчах вӗсен кӗрешӳри пултарулӑхӗ, ӗҫри хастарлӑхӗ пӗрре те чакмасть, ҫӗнӗ хӑватпа хурҫӑланса ҫирӗпленет. Вӗсем политикӑллӑ сыхӑлӑха ӳстерсе пыма, Тӑван ҫӗршыв чапӗпе мухтавне тата ҫӳлерех ҫӗклеме пулаҫҫӗ.

Сталин юлташӑн ҫутӑ сӑнарне асра тытса, хурлӑхлӑ митингра пулнисем Коммунистсен партийӗ, унӑн сталинла Центральнӑй Комитечӗ тата Совет Правительстви тавра тачӑран та тачӑ пӗтӗҫсе тӑма, коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешме тупа турӗҫ.

— Аслӑ аттемӗр тата учителӗмӗр ятне ӗмӗр-ӗмӗрех асра тытӑпӑр,—терӗҫ митингра тухса калакансем.—Сталин юлташ кӑтартса панӑ ҫулпа коммунизм патне ӑнӑҫлӑ сывхарса пырӑпӑр.

Чкаловски районӗ.

Пӗтӗм халӑх хурлӑхӗ

ПЕПРЕҪ. МТС мастерскойӗнче тӑп тулли халӑх. Кунта механизаторсемпе пӗрлех кил хуҫи хӗрарӑмӗсем нумайӑн пухӑннӑ. Пурте ура ҫинче тӑраҫҫӗ. Пурте хурлӑхлӑ.

— Юлташсем!—тет МТС директорӗн политика енӗпе ӗҫлекен заместителӗ Орлов юлташ.— Радио питӗ йывӑр хыпар илсе килчӗ... Пирӗн аслӑ ҫулпуҫ, учитель, чи сывӑх тус—ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗн Председателӗ, КПСС Центральнӑй Комитечӗн Секретарӗ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ вилнӗ. Сталин вилни вӑл—Совет Союзӗнчи халӑхсемшӗн кӑна мар, тӗнчери мӗнпур прогрессивлӑ этемлӗхшӗн пысӑк ҫухату пулать. Партин Центральнӑй Комитечӗ, ССР Союзӗн Министрӗсен Совечӗ тата СССР Верховнӑй Совечӗн Президиумӗ пире ҫак йывӑр кунсенче Ленин—Сталин партийӗ тавра тата тачӑрах пӗтӗҫме чӗнеҫҫӗ. Эпир хамӑрӑн сыхӑлӑха тата ытларах ӳстерсе, Сталин юлташ кӑтартса панӑ ҫулпа коммунизм патнелле кайӑпӑр.

МТС-ри комсомол организацийӗн секретарӗ А. Новиков юлташ хурланса ҫапла калать:

— Пире воспитани парса ӳстернӗ Сталин вилсе кайрӗ. Сталин аслӑ Ленинӑн соратникӗ тата унӑн ӗҫӗсене малалла туса пыракан ҫын пулнӑ. Вӑл пире ӗҫлеме, ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳ тума вӗрентсе, хавхалантарса пынӑ. Сталин вилчӗ. Анчах унӑн ӗҫӗпе вӗрентӗвӗ ӗмӗр-ӗмӗрех пирӗн чӗрере пулӗ, ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем патне ҫул кӑтартса тӑрӗ. Эпир, ҫамрӑксем, вӑл хушса хӑварнисене тата таранрах вӗренсе, коммунизм стройкинче нихҫанхинчен те хасталӑрах кӗрешме тупа тӑватпӑр, — терӗ Новиков юлташ.

— Сталин юлташӑн пӗтӗм пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем халӑхӑн пурнӑҫне аванлатас тӗлӗшпе сыхӑнса тӑнӑ,—тет И. Шмагин комбайнер. Ҫавӑнпа вӑл пирӗншӗн ҫав тӗрӗ хаклӑ та сывӑх ҫын. Вӑл ертсе пынипе эпир колхозсем турӑмӑр, ялхуҫалӑхне чи хӑватлӑ техникӑпа хӗҫпӑшаллантартӑмӑр. Вӑл пире ҫитӗнӳсемпе лӑпланса лармалла мар, тесе вӗрентнӗ. Эпир вӑл хушнӑ пек ӗҫлӗпӗр.

Ун хыҫҫӑн МТС директорӗ А. Курманин юлташ сӑмах илет.— Сталин ертсе пынипе эпир пур йывӑрлӑхсене те ҫӗнтерсе пынӑ. Вӑл ертсе пынипе совет халӑхӗ гитлерла ирсӗрсене ҫапса аркатрӗ. Вӑрҫӑ кунӗ йывӑрлӑхсене кӗске вӑхӑтрах пӗтерсе тата пысӑкрах ҫитӗнӳсем тума пуҫларӑмӑр,—тет Курманин юлташ.—Сталин юлташ ячӗ пире кӗрешме хавхалантаракан ялав. Совет Союзӗнчи ӗҫҫыннисем малашне те хӑйсен вӑйӗсене хӗрхенмесӗр ӗҫлесе, Сталин вӗрентнине пурнӑҫласа пырӗҫ.

Митингри ҫынсем, пурте пӗр кӑмӑллӑ пулса, хӑйсем Коммунистсен партийӗпе Совет Правительстви тавра тачӑ пӗтӗҫсе тӑнине палӑртса резолюци йышӑнчӗҫ.

Сталин—ҫутӑ хӗвел

Малаллине витӗр курса, совет халӑхне тӗрӗс ҫулпа илсе пынӑ генийлӗ ҫулпуҫӑмӑр—И. В. Сталин вилсе кайрӗ. Вӑл вилнине пӗлтерекен хыпар пӗтӗм ӗҫҫыннисен чӗрине йывӑр хурлӑхпа пусса ыраттарчӗ. Паллах, ҫак хурлӑхлӑ кунсенче мӗнле этем чӗри пӗр ыратмасӑр тӳссе тӑма пултарӗ?

Сталин вӑл пирӗн аслӑ Ленин ӗҫӗсене малалла туса пынӑ, хӑйӗн мӗнпур вӑйӗпе мӗнпур ӑс-халне ӗҫҫыннисен ирӗкӗпе телейӗшӗн хунӑ ҫын. Унӑн ячӗ пӗтӗм тӗнче ҫулӗшӗнче ҫутӑ хӗвел пек ҫиҫсе ялтӑрать, унӑн сӑмахӗсем—пуриншӗн те вӗрентӳллӗ, ӗҫӗсем—ӗмӗртен ӗмӗре юлмалла вилӗмсӗр. Ҫавӑнпа Сталин ятне гӗнчен тасти кӗтессинче пурӑнакан ӗҫҫыннисем те ӑшӑ кӑмӑлпа асӑнаҫҫӗ. Империализм чуралӑхӗнче пурӑнакан нумай миллион чурасем, унӑн сӑмахӗсенчен вӑй илсе, хӑйсен ирӗклӗхӗшӗн кӗрешме ҫӗкленеҫҫӗ.

Сталин пире Октябрь революцийӗпе ҫӗнсе илнӗ чӑн-чӑн ирӗклӗхпе ӗҫҫынни прависем ҫинчен калакан законсен ылтӑн кӗнекине ҫырса пачӗ. Вӑл Аслӑ Ленинпа пӗрле туса хунӑ совет государстви тӗнчери чи хӑватлӑ держава пулса тӑчӗ.

Сталин ӗлӗкхи саманара пӗтес патне ҫитнӗ халӑхсене ҫӗнӗрен чӗртсе ура ҫине тӑратрӗ. Ленинла-сталинла наци политикине пула пирӗн чӑваш халӑхӗ те, ӗмӗрхи тӗттӗмлӗхпе мӗскӗнлӗхрен хӑтӑлса, историллӗ аслӑ ҫул ҫине утса тухрӗ. Вӑл халӗ ӗнтӗ Совет ҫӗрӗнчи тӑванла халӑхсен пысӑк ҫемйинче ҫутӑ та телейлӗ кун-ҫулпа пурӑнать. Ҫавӑнпа та пирӗн чӑваш халӑхӗ аслӑ Сталина—хӑйӗн тӑван ашшӗне тата учительне чӗререн юратса хисеплет. Сталин юлташ вилни ҫак кунсенче чӑваш халӑхӗн кӑмӑлне йывӑррӑн пусать, чӗрине хурлӑх хӗссе ыраттарать. Аслӑ ҫулпуҫӗ вилнӗшӗн пирӗн чӑваш халӑхӗ пӗтӗм совет халӑхӗпе пӗрле вӗҫӗмсӗр кулянать.

Ҫак пысӑк хурлӑх хушшинчех эпир лайӑх астуса тӑратпӑр: Сталин вилчӗ пулсан та, пирӗн вӑл кӑтартса хӑварнӑ ҫулпа хӑюллӑн илсе пыма пултаракан хӑватлӑ Коммунистсен партийӗ пур, Сталинӑн тӗрӗс вӗренекенӗсенчен тӑракан партин Центральнӑй Комитечӗ пур. Чӑваш ӗҫҫыннисем, Коммунистсен партийӗпе унӑн Центральнӑй Комитечӗ тавра татах та тачӑрах пӗрлешсе тӑрса, коммунизмла общество тӑвассишӗн пӗтӗм тимне хурса ӗҫлӗҫ.

С. ЭЛЬГЕР,
Чӑваш халӑх поэчӗ.

Ватӑ колхозник сӑмахӗ

ОКТЯБРЬСКИ. Пирӗн аслӑ ҫулпуҫӑмӑр И. В. Сталин юлташ вилни ҫинчен радио тӑрӑх пӗлтерсенех районти колхозсемпе предприятисенче, шкулсемпе учрежденисенче хурлӑхлӑ митингсем пулса иртрӗҫ. Сталин ячӗпе тӑракан колхоз клубне колхозниксемпе колхозницӑсем нумай пухӑнчӗҫ. Чи ватӑ колхозник А. Комаров юлташ хурлӑхлӑ митингра ҫапла каларӗ:

— Эпӗ 87 ҫулта. Аслӑ Сталин вилни ҫинчен пӗлтерекен йывӑр та хурлӑхлӑ хыпар-манӑн чӗрене вӗҫӗмсӗр ыраттарать. Юратнӑ ҫулпуҫӑмӑр Сталин ячӗ—пирӗн чӗрере. Пире вӑл Ленинпа пӗрле кӗрешсе, ӗлӗкхи асаплӑ пурнӑҫран хӑтарса, телейлӗ пурнӑҫ туса пачӗ. Юратнӑ Сталин ертсе пынипе эпир Аслӑ Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче нимӗҫ фашисчӗсене ҫӗнтертӗмӗр. Унӑн ячӗ пире коммунизм тума хавхалантарать. Сталин ятне ӗмӗр-ӗмӗр асра тытса, эпир малашне татах та лайӑхрах ӗҫлесе пырӑпӑр.

«Волгарь» колхоз клубӗнче ирттернӗ хурлӑхлӑ митинга 400 ҫын ытла пухӑнчӗ. Хурлӑхлӑ митинга колхоз председателӗ Трофимов юлташ уҫрӗ. Вӑл колхозниксене ҫак хурлӑхлӑ кунсенче парти чӗнсе каланине чӗрере тытма, колхоз стройне малалла ҫирӗплетессишӗн ырми-канми ӗҫлеме чӗнчӗ.

Районти ӗҫҫыннисем юратнӑ ҫулпуҫӑмӑр И. В. Сталин ӗҫӗшӗн—коммунизм ҫӗнтерӗвӗшӗн вӑй-хӑвата хӗрхенмесӗр кӗрешме тупа тӑваҫҫӗ.

ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ СТАЛИН

вилнĕ пирки пĕтĕм прогрессивлă этемлĕх чĕререн хурланать

Албани

ТИРАНА, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Албани халăхĕ Иосиф Виссарионович Сталин вилни çинчен пĕлтернĕ хурлăхлă хыпара чĕререн кулянса йышăнчĕ.

Çĕршывра пĕтĕм халăх траурĕ иртерме йышăнчĕ.

Тиранăри радио Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕ чĕнсе каланине тата Албанири ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕ, Албани Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕ тата Халăх Пухăвĕн Президиумĕ чĕнсе каланине пĕтерсе тăрать. Ĕçлисемпе И. В. Сталин монументĕсем умĕнче хисеплĕ хурала тăраççĕ, вăл монументсем патне çĕршер çын пухăнать. Вĕсем ялавсах Сталин вĕрентнĕ пек ĕçлеме; совет халăхĕпе туслă пурăнассине тĕреклетме, Албанири ĕçлĕх партийĕ тавра тата тачăрах пĕтĕçме, Иосиф Виссарионович Сталин хушса хăварнисене пурнăçа кĕртме тупа тăваççĕ.

Паян Албанири ĕçлĕх партийĕн Центральнăй Комитечĕн, Албани Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕн тата Албани Халăх Республикин Халăх Пухăвĕн Президиумĕн пĕрлехи ларăвĕ пулса иртнĕ.

Лару йышăннă чĕнÿре çапла калать:

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ, тăванла совет халăхĕ, мире юратакан пĕтĕм этемлĕх, вăл шутра пирĕн партипе пĕтĕм халăх умне пысăк хурлăх тухса тăчĕ. Совет Союзĕнчи рабочисен, колхозниксен, интеллигентсен, пĕтĕм тĕнчери ĕçлисенĕн чи юратнă ертÿçи, чи юратнă çын, Ленинăн боевой соратникĕ тата унăн ĕçне малалла туса пынă çын, Коммунистсен партийĕпе совет халăхĕн аслă сулăпуçĕпе учителĕ, пĕтĕм этемлĕхĕн аслă учителĕ, пирĕн халăхăн чи хаклă тусĕ — Иосиф Виссарионович Сталин вилни пирки пирĕн çĕршыври ĕçлисенсен чĕри те хытă ыратать.

Сталин ячĕ пирĕн партипе пирĕн халăхăн ĕмĕрлĕхе хаклă. Сталин ячĕ пирĕн тăван çĕршыв ирĕклĕхе, пурнăçне тата малашлăхне палăртса тăрать, Сталин ячĕ—çирĕп тата ĕмĕрлĕхе пыракан туслăхăн символĕ. Çак туслăх пирĕн халăха Совет Союзĕнчи тăванла халăхсемпе çыхăнтарать. Сталин ячĕ мир символĕ пулса халăхсен хăрушсăрлăхĕ пулса тăрать.

Ларура пĕтĕм çĕршывра траур пулмалли çинчен постановлени йышăннă.

Германи

БЕРЛИН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин вилни çинчен пĕлтерекен хыпар Демократиллĕ Германи Республикинчи ĕçлисенĕн чĕрине ыраттарать. Предприятисенче, учрежденисенче, шкулсенче, ялти общинăсенче йышлă митингсем пулса иртеççĕ. Митингсенче КПСС Центральнăй Комитечĕне СССР Министрĕсен Совечĕ ячĕпе, Совет Союзĕн Демократиллĕ Германи Республикинчи миссийĕ ячĕпе, çавăн пекех Совет Союзĕн Германири контроль комиссийĕ ячĕпе ĕçлисен аслă сулăпуçĕ, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхĕн сулăпуçĕ Сталин юлташ вилнĕ пирки хурлани çинчен калаçса сырусемпе телеграммăсем йышăнаççĕ. Паян Берлин хулин демократиллĕ секторĕнче тата пĕтĕм Демократиллĕ Германи Республикинче общественнăй çуртсем çинче, площадьсенче, урамсенче траурлă ялавсем вĕлкĕшеççĕ тата аслă сулăпуçĕ И. В. Сталин юлташăн траурлă лентăсемпе карса хунă портречĕсем курăнса тăраççĕ.

Демократиллĕ Германи Республикин Халăх Палатин председателĕ Иоганнес Дикман Демократиллĕ Германи Республикин Халăх Палати ячĕпе паян ССР Союзĕн Демократиллĕ Германи Республикинчи дипломатилле миссин пуçлăхне Ильичев посола тата Совет Союзĕн Контроль Комиссин председательне арми генерале Чуйкова Иосиф Виссарионович Сталин вилнĕ пирки Совет Союзĕн Правительствипе совет халăхне хăй хурланни çинчен пĕлтерни çырăва панă.

Англи

ЛОНДОН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Великобританири Коммунистсен партийĕн исполнительнăй комитечĕ заявлени пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă:

«Коммунистсен партийĕн исполнительнăй комитечĕ Англири мире юратакан мĕнпур çынсем ячĕпе Совет правительствине, совет халăхне тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетне Иосиф Сталин юлташ вилнĕ пирки хурлани çинчен пĕлтерет.

Сталин вилнĕ, анчах унăн çитĕнĕвĕсем—хăватлă, тĕреклĕ Совет Социализмлă Республикисен Союзĕ, пĕтĕм тĕнчери мир тĕрĕк, ялсем çитерейми «Ленин—Сталин» партийĕ, Коммунистсен партийĕ, ирĕклĕхе партип ертсе пыракан пĕтĕм тĕнчери мир тĕрĕк пурăнать.

Хурлăхлă вăхăтра 200 миллионлă совет халăхне коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви тавра ирĕклĕ пĕрлешсе тăрать...» [illegible]

Не халăх Китайĕн халăх демократи çĕршывĕсенчи çĕршер миллион ĕç çынĕсем, тĕнчери мĕнпур çĕршывсенчи рабочисемпе хресченсем, прогрессивлă çынсем гнойĕсен хуйхăлаççĕ. Çак хăватлă вăйлă вăл вăрçă чĕртекенсене тытса чарма пултарать. КПСС XIX-мĕш съездĕнче Сталин юлташ Коммунистсен партийĕсене демократиллĕ партисен представителĕсене пуç пулса тăракан классем каларса иван тăнă буржуалла-демократиллĕ ирĕклĕх ялавне çĕклеме чĕнсе каларĕ. Вăл Коммунистсен партийĕсене демократиллĕ партисен представителĕсене пуç пулса тăракан классем долларса сутса янă наци суверенитечĕн ялавне çĕклеме чĕнсе каларĕ.

Сталин юлташăн çак кăтартăвне пурнăçа кĕртессишĕн пирĕн пĕтĕм вăйпа тăрса ĕçлемелле, ирĕклĕ, демократиллĕ, никама пăхăнса тăман Англишĕн, мир тата социализмлă прогрессшăн тăракан Англишĕн халичен нихçан пулман вăйпа кĕрешмелле. Çак ответлă вăхăтра эпир траурлă ялавсене тайăлтаратпăр. Пирĕн шурне те сыхă пулмалла, вăрçă хăрушлăхне хирĕç, мире сыхласа хăварассишĕн, Корейăри вăрçа чарса лартассишĕн, пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тăвассишĕн кĕрешĕве çĕршер хут вăйлатмалла.

Социализма сыхласа тăни вăл пĕтĕм этемлĕхе вăй тата шанăç парать;

Англин нацилĕ никама пăхăнмалăхне Америка пуç пулса тăрассинчен хÿтĕлесе тăрассишĕн кĕрешмелле, граждансен ирĕклĕхне хÿтĕлемелле;

Миршĕн, ĕçлисенсен пурнăçне лайăхлатассишĕн, социализм патне пырассишĕн кĕрешес ĕçре рабочи класăн ирĕклĕхне тĕреклетмелле;

Коммунистсен партине — ĕçлисенсене çĕнтерÿ тума май паракан пĕртен-пĕр шанчăка тĕреклетмелле.

Сталин юлташ вĕрентнине пурнăçлама сахал паратпăр.

Франци

ПАРИЖ, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Паян «Юманите» хаçатра И. В. Сталин юлташăн пысăк портречĕ тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, СССР Министрĕсен Совечĕ, СССР Верховнăй Совет Президиумĕ чĕнсе каланине пичетленĕ.

«Юманите» хаçат çапла çырать: «Пĕтĕм тĕнчери ĕçлисенсем, çĕр чăмăрĕ çинчи мĕнпур халăхсем паян хурлăхлă...

Пирĕн аслă халăх Совет Союзĕнчи халăхсемпе пĕрле хурланать. Çак кунсенче нихçанхинчен те ытла вăл тăванла тата пĕр шухăшлă пулнине кăтартать.

«Юманите» хаçат И. В. Сталин юлташăн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен нумай материалсемпе фотоÿкерчĕксем пичетлет. Вăл Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ, Совет государствине тăвас ĕçре, СССР Союзĕнче коммунизм тăвас ĕçре, этемлĕхе фашизм чуралăхĕнчен çăлса хăварас ĕçре тата халăхсен миршĕн пысăк кĕрешĕвĕнче И. В. Сталин пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртать.

Хаçат марксистла-ленинла теорие аталантарас енĕпе Сталин юлташ пысăк вырăн йышăнса тăнине кăтартать.

ПАРИЖ, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Ирхине Франци Компартин нациллĕ конференцийĕнче Франци Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн секретарĕ Жак Дюкло делегатсем умĕнче кĕске сăмах тухса каланă. Вăл И. В. Сталин юлташ вилни çинчен калакан хурлăхлă хыпара пĕлтернĕ. Делегатсем Дюкло пĕлтернине ура çине тăрса, куççульсене чарма вăй çитереймесĕр, итленĕ.

Конференци хăйĕн ĕçне вăхăтлăха чарса лартма йышăннă. Делегатсем хăйсен департаменчĕсене тухса кайнă. Вĕсем пĕтĕм тĕнчери ĕçлисенсен аслă сулăпуçĕ И. В. Сталин вилнĕ пирки килсе тухнă хурлăхлă кунсене Франци халăхĕпе пĕрле ирттерĕççĕ.

Япони

ТОКИО, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Киодо Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Япони парламенчĕн советниксен палатин членĕ, пĕтĕм тĕнчери Сталинла преми лауреачĕ Икуо Ояма И. В. Сталин вилнĕ пирки чĕререн хурлани çинчен калаçса панă. Сталин, тенĕ Ояма, мир символĕ. Сталин вилчĕ, анчах унăн миршĕн кĕрешме хавхалантаракан идейисем массăсен чĕринче ялан пурăнаççĕ.

Финлянди

ХЕЛЬСИНКИ, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ вилни çинчен калакан хыпар Финляндири ĕçлисенсен чĕрине ыраттарать. Финляндири государство учрежденийĕсенче — Хельсинкири государство ялавĕсем хуйхăлла усăнса тăраççĕ.

Паян Совет Союзĕн Финляндири посольствинче государство организацийĕсемпе дипломатилле корпус представителĕсем пулнă. Вĕсем Совет Союзĕн Финляндири посольствине Финляндин президентĕ Ю. Паасикиви, Финлянди министрĕсен совечĕн председателĕ Ю. К. Кекконен тата ытти çынсем хурлани çинчен пĕлтернĕ...

Иран

ТЕГЕРАН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Иосиф Виссарионович Сталин вилни çинчен пĕлтернĕ хыпар паян ирех Иран столицинчи халăхпа провинцири халăх хушшинче сарăлнă. Иранри ĕçлисенсем çак хыпар пирки чĕререн хурланаççĕ.

Швеци

СТОКГОЛЬМ, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Стокгольмра ирхине тухнă хаçатсем пурте Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕ ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Иосиф Виссарионович Сталин юлташ вилнĕ пирки чĕнсе каланине, çавăн пекех тата унăн чирĕпе вилĕмĕ çинчен медицина енĕпе пĕлтернине пичетлесе кăларнă.

Хаçатсем малти страницăра И. В. Сталин юлташăн портретне пичетленĕ.

Хаçатсем И. В. Сталин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен статьясемпе фотоÿкерчĕксем нумай пичетлеççĕ. Чылай хаçатсем И. В. Сталин биографине пичетлесе кăларнă.

«Свенска дагбладет» хаçат Швецири политикăллă мĕнпур партисен лидерĕсен заявленийĕсене пичетленĕ. Унта вĕсем Совет государстви историйĕнче И. В. Сталин мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен хăйсен шухăшĕсене каласа параççĕ.

Норвеги

ОСЛО, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Столицăри ирхи хаçатсем пĕрремĕш страницисенче Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совечĕ И. В. Сталин вилнĕ пирки чĕнсе каланине пичетленĕ. Хаçатсем И. В. Сталин юлташăн портречĕсене пичетленĕ. Норвегири радио ирхине панă передача пĕтĕмпех çак ыйăр хыпар çинчен пулнă. И. В. Сталин юлташ вилни Норвегири ĕçлисенсене хурлантарнă. Паян ирех совет посольстви Норвеги столицинчи ĕçлисенсен представителĕсем нумай пынă. Вĕсем Совет Союзĕнчи ĕçлисенсемпе Совет Правительствине хурлăх çухату пирки хăйсем кулянни çинчен каласа пама ыйтаççĕ.

Бельги

БРЮССЕЛЬ, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). И. В. Сталин вилни çинчен Бельги çыннисем паян ирех пĕлнĕ Брюссельте тухакан хаçатсем нумайĕшĕ çакăн çинчен ирхи кăларăмсенче пĕлтернĕ. Вĕсем И. В. Сталин юлташ вилни çинчен малти страницисенче пичетлесе кăларнă.

Бельгири предприятисенче траурлă митингсем пулса иртеççĕ. Совет Союзĕн Брюссельти посольствинче консульствине общественлă организацисен нумай представителĕсем ÿпрăм сынсем пулса кайнă. Вĕсем И. В. Сталин юлташ вилнĕ пирки чĕререн хурлани çинчен пĕлтереççĕ.

Совет посольствине телеграммăсемпе çырусем нумай пыраççĕ. Вĕсем Сталин юлташ вилни совет халăхĕшĕн çеç мар, пĕтĕм прогрессивлă этемлĕхшĕн пысăк çухату пулни çинчен калаççĕ. Бельгири ĕçлисенсен ыйăр çухату пирки чĕререн хурланса хăйсен Совет халăхне хисеплесе тата унпа туслă пулни çинчен калаççĕ.

Дани

КОПЕНГАГЕН, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Данири хаçатсем паян Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ, СССР Министрĕсен Совечĕ тата СССР Верховнăй Совет Президиумĕ партин мĕнпур членĕсене, Совет Союзĕнчи мĕнпур ĕçлисене СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕ тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Иосиф Виссарионович Сталин вилнĕ пирки чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă.

«Ланд ог фольк» хаçат пĕрремĕш страницăра Иосиф Виссарионович Сталин портретне пичетлесе кăларнă.

Уместатьяра хаçат çапла çырать: Сталин юлташ—Ленин соратникĕ, Совет Союзĕн генилле сулăпуçĕ, коммунизм зодчийĕ, мир ялавне çÿле тытса пыракан çын пирĕнтен уйрăлса кайрĕ.

Дани халăхĕ Сталин ятне ĕмĕр-ĕмĕр асра тытать, Дани халăхне гитлерла захватчиксенчен хăтарас ĕçе пысăк вăй хунă çын çинчен ялан асра тытĕ.

Пирĕн çĕршывра пурте, тесе çырать юлашкинчен хаçат, кам социализм идейисене йышăнать, ирĕклĕхе мире юратать, вĕсем пурте И. В. Сталин вилнĕ пирки чĕререн кулянаççĕ. Вĕсем çирĕппĕн çакна шанса тăраççĕ: Сталинăн вилĕмсĕр ĕçĕ пурăнать, аталанать, вăл Совет Союзĕпе çĕнтерÿ пекех, тĕнчере пур çĕрте те ...

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНАЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтерет: Корея Халăх çарĕн çеçзкиненчĕсемпе Китай халăх добровольцĕсем çапăçсем Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçаççĕ.

Зенитнăй артиллери тата тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтаксем тăшманăн 5 самолетне персе ÿкернĕ.

Америка агрессорĕсем наркăмăшлă газсемпе усă кураççĕ

ПЕКИН, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Корея фронтĕнчен мартăн 6-мĕшĕнче пĕлтернине çапла калать.

Январь тата февраль уйăхĕсенче Америка агрессорĕсем Корейăпа Китай частĕсем çине наркăмăшлă газсем тултарнă снарядсемпе темиçе хутчен пенĕ.

Январĕн 25-мĕшĕнче Чхолвоньран сурçĕр-хĕвелтухăçнерехри 205-мĕш высотăна илме кăтланса чылай поражени тÿснĕ хыççăн, тăшман икĕ хутчен халăх çарĕн позицийĕ çине наркăмăшлă газсем тултарнă снарядсемпе пенĕ. Çакă вăл пĕтĕм тĕнче йышăннă правăна пăсни пулать. Январĕн 31-мĕшĕнче кăнтăрла 4 сехетре тăшман артиллерийĕн хытă персе тăнă хыççăн, халăх çарĕн позицийĕсем çине наркăмăшлă газсем тултарнă снарядсем пенĕ. Февралĕн 5-мĕшĕнче тăшман артиллерийĕ пăчăхтаракан тата наркăмăшлă газсем тултарнă виçĕ снаряд пере янă. Снарядсем çурăлнă вырăна шурă, тĕссĕр тĕтĕм курăннă.

Тепĕр сектора, Саннёонран кăнтăр еннерех, февралĕн 4-мĕшĕнче кăнтăрла 3 сехетре тăшман наркăмăшлă газсем тултарнă снаряд пенĕ. Снаряд çурăлнă вырăнта сарă-симĕс тĕслĕ тĕтĕм сарăлнă. Февралĕн 18-мĕшĕнче Йоньчхоньран кăнтăр-хĕвеланăç еннерех халăх çарĕн позицийĕн çине тăшман 3 снаряд пенĕ. Снаряд çурăлнă хыççăн йÿçĕ шăрşă газ сарăлнă.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ

Политикăллă Комитетра

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Политикăллă комитетăн мартăн 5-мĕшĕнче пулнă кăнтăрлахи ларăвĕнче Корея ыйтăвĕ тăрăх Уругвай, Англи, Австрали, Колумби, Греци тата Парагвай делегачĕсем тухса каланă.

Америкăпа Англи блокĕн çак представителĕсем тухса калани тата тепĕр хут Пĕрлешÿллĕ Штатсем, Англи тата вĕсем хыççăн пыракан çĕршывсем Генеральнăй Ассамблейăн хальхи сессийĕнче Корейăри вăрçа чарса лартасси çинчен решени йышăнма пăрăсшăн мар пулнине кăç-кĕретĕн кăтартса парĕ.

Англи представителĕ Джебб уççăнах çапла каланă: «Хальхи вăхăтра Корея ыйтăвне пур енчен те сÿтсе явма вырăнлă май килсе тухман-ха», тенĕ. США союзникĕсене «пĕрлехĕ тата шанчăклă» пулма чĕнсе каласа, Англи делегачĕ Корея ыйтăвĕ тăрăх «конструктивлă ĕçсем валли хăçан та пулин вăхăт килсе çитет» тенĕ. Уругвай, Австрали, Колумби, Греци, Парагвай делегачĕсем те çавна майлах каланă. Çапла ĕнтĕ вĕсем те Америка тактикине йышăннă. США хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Америка тактики вăл Генеральнăй Ассамблейăн VIII-мĕш сессийĕнче Корея ыйтăвне тăракан ыйту пирки нимĕн те тăвас марри пулать. ООН ячĕ витĕнсе, США çак вăхăтра Китай Халăх Республикипе Демократиллĕ Корея Халăх Республикине çар тата политика енĕпе хĕсме усă курасшăн.

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Генеральнăй Ассамблейин Политикăллă комитечĕ Корея ыйтăвне малалла сÿтсе явнă.

Ли Сын Ман представителĕ хăйĕн сăмахĕнче Корейăри вăрçа малалла тăсма чĕннĕ. Çакăнпа пĕрлех вăл «пĕтĕм Кăнтăр Корея халăхĕ питех те хаспăрланса çитнине, ялан выçă тата сехĕрлесе пурăннине» йышăннă.

Ун хыççăн Украина ССР представителĕ Барановский тухса каланă. Генеральнăй Ассамблейăн 1952 çулхи декабрĕн 3-мĕшĕнчи резолюцийĕ Корейăри вăрçă ĕçĕсене чарса лартма пулăшас вырăнне Америка тĕллевĕшĕн Корейăра агрессие тата малалла вăйлатма кăна пулăшать, тенĕ вăл. Барановский çакна кăтартса панă: декабрĕн 3-мĕшĕнчи резолюци Пĕрлешÿллĕ Штатсене тыткăна илнĕ çар çыннисене суйласа илес, тыткăна илнĕ пиншер çар çыннисене ирĕксĕрлесе Чан Кай-шипе Ли Сын Ман çарĕсен сайралăха пыракан речĕсене тăратас практикăна малалла пурнăçа кĕртме май панă. Çак практика, тенĕ Барановский, Ли Сын Ман çарне Кăнтăр Корейăри çамрăксене мобилизацилесси çинчен нумаях пулмасть панă приказ, çавăн пекех Ли Сын Манпа Япони правительстви хушшинче 600 пин корееца репатриацилесси çинчен йышăннă килĕшÿ Азире агресси ĕçĕсене сарма Америка хатĕрленĕ планпа çыхăнса тăраççĕ.

Барановский чылай делегатсем Совет Союзне хирĕç элеклесе каланине тăрă шыв çине кăларнă. Вăл Корейăна ура çине тăратас ыйту çинче чарăнса тăнă. Ура çине тăратма кирлĕ малалланă гумалли условисем вĕсем, тенĕ вăл, халăх вăрçă ĕçĕсене чарса лартасси тата ют çĕршывсен мĕнпур çарĕсемпе добровольцĕсене Корейăран илсе тухасси пулать. Юлашкинчен вăл çапла каланă: ООН-ăн «Корейăна пĕрлештермелли тата ура çине тăратмалли» текен комиссийĕ Америка политикин хĕçпăшал кăна пулса тăнă пирки, Украина ССР делегацийĕ ăна салатса ярассине тăрать, тенĕ.

Гоминдан делегачĕ Цзян Тин-фу Совет Союзне хирĕç элеклĕ сăмахсем каланă.

Эфиопи представителĕ 1952 çулхи декабрĕн 3-мĕшĕнчи резолюцие хÿтĕлесе сăмах каланă.

Корейăри вăрçа халех чарса лартмалла

Миршĕн тăракансен Чехословаки комитечĕ пĕлтерни

ПРАГА, мартăн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Чехословакири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Прагăра миршĕн тăракансен Чехословаки комитечĕн Президиумĕн ларăвĕ пулнă. Кун йĕркинче тăракан пĕрремĕш ыйту — Корейăри вăрçа чарса лартасси çинчен. Миршĕн тăракансен Чехословаки комитечĕн Президиумĕ заявлени йышăннă, унта çапла каланă:

Миршĕн тăракансен Чехословаки комитечĕ Америка империалисчĕсем тискер вăрçă вăрçнине тата Корейăпа Сурçĕр Китайра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине хирĕç татах протестлет.

Миршĕн тăракансен Чехословаки комитечĕ Пĕрлешнĕ Нацисен организацине халăх хушнă миссие пурнăçлама—Корея ыйтăвне мирлĕ майпа татса парасси çине тăма чĕнет. Пирĕн çĕршыв халăхĕ Совет Союзĕн правительстви панă тĕрĕс сĕнÿсене Корея халăхĕн представителĕсем хутшăннипе татса пама чĕнсе калать.

Америка агрессорĕсем Корея, Китай тата Инçет Хĕвелтухăçĕнчи ытти çĕршывсен халăхĕсене хирĕç çĕнĕ преступленисем хатĕрленĕ вăхăтра, миршĕн тăракансен Чехословаки комитечĕ чехсемпе словаксен çĕнĕрен çуралса тăнă наци фронтне кĕрекен мĕнпур арçынсене, хĕрарăмсене, çамрăксене тăтăклăн протестлеме чĕнет.

Албанипе Польша хушшинче тавар улăштарса илесси çинчен тунă килĕшÿ

ТИРАНА, мартăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Тиранăра Албани Халăх Республикипе Польша Халăх Республики хушшинче 1953—1955 çулсенче тавар улăштарса илесси тата тÿлевсем çинчен килĕшÿ тунă.

Албани Польшăна битум, нефть, табак тата ытти таварсем тăратать. Польша Албание пăравуссем, вагонсем, çĕр кăмăрĕ промышленноçĕ валли оборудовани, пусма-таварсем, медикаментсем тата ытти таварсем сутать.

Çавăн пекех тата икĕ çĕршыв хушшинче наукăпа техника тĕлĕшĕнчен пĕрпĕрне килĕштерсе ĕçлесси çинчен протокол йышăннă.

США-ра ХАКСЕНĔ ТЕРĔСЛЕСЕ ТАРАССИНЕ ПАРАХĂÇА КАЛАРНĂ

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Вашингтонран пĕлтернĕ тăрăх, США правительстви мартăн 5-мĕшĕнче чылай таварсен хакне вăл шутра çăкăр тата ытти таварсен хакне тĕрĕслесе тăрассине пăрахăçа кăларнă. Хаксене пĕр виçере тытас тĕллевпе ĕçлекен управленин руководителĕ Фрихил: хаксене тĕрĕслесе тăрассине пăрахăçа кăларни çăкăр тата ытти таварсемпе автомобильсен хакĕ ÿсесси патне илсе пырать, тенĕ.

Кунччен маларах Фрихил çакна кăтартса панă: тавар хаксене тĕрĕслесе тăрассине пăрахăçа кăларнă хыççăн çăкăр хаксем сахалтан та 3 миллиард доллар ÿсĕ.

„Нарспи" поэмăна украинла пичетлесе кăлараççĕ

Украина халăхĕ чăваш литературине юратса вулать. Çакна чăваш совет литератури никĕсне хунă Çеçпĕл Мишши вилнĕренпе 30 çул тултарнине Украинăра чысласа палăртнă тунине вăл каласа кăтартсах панă. Украинăра поэзия çăвăрчĕ кун çарса пичетлеççĕ.

Халĕ кунта К. В. Иванован «Нарспи» поэмине украинла кусарса пичете панă. Вăл çитес кунсенче пичетлесе кăларăççĕ.

Ю. НАЗАРЕНКО.

Ялхуçалăх налогĕ тÿлессе

ЭЛЕК. Районти чылай ял Совечĕсенче аванс шучĕпе ялхуçалăх налогĕ пухасси айăкра пулса пырать. Еремкасси, Пиçенер, Писĕп, Туктап ял Советĕсен вунăшар хуçалăхсем ялхуçалăх налогĕн пĕрремĕш срокра, мартăн 15-мĕшĕччен, тÿлемелли пайне парса татрĕç, нихĕмĕн срокра пама пама ял уксапа тÿлеме тытăнчĕç.

Ялхуçалăх налогне тÿлениве пĕрлех, нумай ĕçлисенсем самообложени укçине вăхăтра парса татаççĕ. Районти Элĕк ял Совечĕ халăхран самообложени укçи пухмалли плана ирттерсе тултарчĕ.

А. ИСАЕВ.

Редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

СССР халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли тăваттăмĕш государственнăй заем

7-мĕш выляври выигрышсем тухнине кăтартакан

СПРАВКА-ТАБЛИЦА

Выляв 1953 çулхи мартăн 1-мĕшĕнче Дрогобыч хулинче пулнă.

Таблицăра 100 тенкелĕх облигаци çине выигрышсем тухнине кăтартнă. Выигрыш суммине выляса илнĕ облигаци хакĕ те кĕрет.

Заемăн мĕнпур 242 разрядĕнчи çак серисемпе облигацисен номерĕсем çине выигрыш тухнă.

Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ	Сери №№	Облигаци №№	Миçе тенкĕ
060015	01*)	1.000	070528	1—50	200
060024	34*)	1.000	070592	13*)	1.000
060150	49*)	1.000	070755	1—50	200
060151	1—50	200	070775	1—50	200
060184	1—50	500	070933	1—50	500
060557	1—50	200	071175	47*)	1.000
060711	14*)	1.000	071191	11*)	1.000
060725	21*)	1.000	071207	1—50	200
060922	17*)	5.000	071288	1—50	200
061158	1—50	200	071430	15*)	1.000
061216	1—50	200	071498	1—50	200
061344	29*)	1.000	071621	17*)	5.000
061468	38*)	1.000	071678	43*)	1.000
061490	28*)	1.000	071713	1—50	200
061558	32*)	1.000	071781	38*)	1.000
061606	1—50	200	071968	19*)	1.000
061732	1—50	500	072151	01*)	1.000
062014	46*)	1.000	072313	25*)	1.000
062077	1—50	500	072409	1—50	500
062254	18*)	1.000	072428	31*)	1.000
062336	1—50	200	072554	14*)	10.000
062368	1—50	500	072826	29*)	1.000
062408	41*)	5.000	072843	19*)	1.000
062524	1—50	500	072985	07*)	1.000
062755	18*)	1.000	073038	16*)	1.000
062762	11*)	1.000	073106	40*)	10.000
062950	25*)	1.000	073323	1—50	200
062968	1—50	200	073558	02*)	1.000
063001	1—50	200	073744	1—50	200
063229	1—50	200	073767	02*)	5.000
063245	1—50	500	073833	03*)	1.000
063261	1—50	200	073920	48*)	50.000
063330	1—50	200	074066	1—50	200
063335	39*)	1.000	074156	05*)	25.000
063348	1—50	200	074232	1—50	200
063720	34*)	5.000	074245	20*)	1.000
063802	31*)	1.000	074264	10*)	1.000
063819	19*)	1.000	074327	37*)	1.000
063886	29*)	1.000	074397	05*)	1.000
063890	38*)	1.000	074519	05*)	5.000
063973	03*)	1.000	074627	13*)	1.000
064092	50*)	1.000	074655	23*)	1.000
064347	32*)	1.000	074667	1—50	200
064367	31*)	1.000	074767	11*)	1.000
064388	35*)	10.000	074773	25*)	1.000
064526	40*)	1.000	074850	15*)	1.000
064529	1—50	200	074926	24*)	25.000
064536	1—50	500	074967	12*)	1.000
064575	1—50	200	075490	17*)	1.000
064605	26*)	5.000	075592	23*)	1.000
064824	1—50	200	075644	09*)	1.000
065035	1—50	500	075869	46*)	1.000
065095	26*)	1.000	075955	1—50	500
065199	25*)	1.000	075983	16*)	10.000
065997	1—50	500	076307	27*)	1.000
066015	08*)	1.000	076348	05*)	1.000
066305	13*)	1.000	076356	32*)	1.000
066335	06*)	1.000	076416	35*)	1.000
066397	17*)	1.000	076432	1—50	200
066436	15*)	1.000	076459	11*)	1.000
066489	17*)	1.000	076720	27*)	1.000
066607	13*)	1.000	076759	19*)	1.000
066608	42*)	1.000	076834	16*)	10.000
066664	27*)	1.000	076838	09*)	1.000
066698	18*)	1.000	076959	29*)	1.000
066856	03*)	1.000	077015	14*)	1.000
067077	49*)	1.000	077039	1—50	500
067135	01*)	1.000	077163	1—50	200
067316	1—50	500	077222	17*)	1.000
067774	41*)	1.000	077236	21*)	1.000
068058	14*)	1.000	077243	1—50	500
068077	04*)	1.000	077835	47*)	1.000
068281	1—50	200	077902	1—50	500
068449	28*)	1.000	078075	16*)	1.000
068725	08*)	1.000	078218	09*)	5.000
069065	1—50	500	078236	1—50	200
069071	1—50	200	078249	40*)	1.000
069094	1—50	500	078472	48*)	5.000
069101	1—50	200	078687	35*)	1.000
069115	1—25	200	078892	02*)	5.000
069411	16*)	1.000	078951	1—50	500
069845	22*)	1.000	078993	26*)	1.000
069879	33*)	1.000	079135	31*)	1.000
069955	1—50	200	079570	44*)	1.000
070173	46*)	1.000	079924	1—50	500
070370	27*)	1.000	079929	21*)	1.000
070511	13*)	1.000			

*) Çак серие кĕрекен облигацисен ытти 49 номерĕ 200-шер тенкĕ выляса илнĕ.

ЧĂВАШ АССР ПЕРЕКЕТ КАССИСЕМПЕ ГОСУДАРСТВО КРЕДИЧĔН УПРАВЛЕНИЙĔ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленноçть пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01329 Типография №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.